# Ялта чăвашла калаçма манса пыни кăмăла хуçать • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

38 (856) №, 2014, авăн, 20

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

# Чăваш хĕрарăмĕ

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Лазаревсем техника ăсталаççĕ, çемйипех кĕнеке вулаççĕ. **2 стр.**

Чăвашсен йышĕ сахалланни темиçешне кăна пăшăрхантарать паян. **3 стр.**

Пĕтнĕк пӳлĕмре те ӳсет. **8 стр.**

Савни çырăвне çунтарма хăяймастăп... **9 стр.**

Майра кин яла килнĕ. **10 стр.**

Мăшăрĕшĕн тунсăхлакан шурă чарлан. **11 стр.**

*Кайранхи телей малтанхинчен çутăрах.*
Каларăш.



М.ТУМАЛАНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

2 стр.

# Кĕр яланах пуян килет

## Тăван килтен хакли çук

Мăнçырма урамĕпе пынă май "çăматăллă" чăхсене курса тĕлĕнтĕмĕр. Епле мăнаçлă утаççĕ. Хури те, чăпарри те пур. Тĕрĕссипе, пушмак тăхăнтартман кайăк-кĕшĕке, ури кăна ытла тĕклĕ. Вĕсен хуçисемпе хăвăртрах паллашас килчĕ. "Андреевсем ăратлă чăх-чĕп, выльăх-чĕрлĕх усраççĕ", – уçăмлатрĕç ял çыннисем.

...Йăлтах пасартан туяннă пĕр автанран пуçланнă. Вăл хальхи хуçисене илемĕпе тыткăнланă иккен. Çавăнпах ку килте 10 çул ытла чăхсем çакнашкал чĕпĕсем пусса кăлараççĕ. Хăйсем каланă тăрăх – ăратлă кайăк-кĕшĕкĕн çăмарти пысăкрах. Халĕ вĕсен кăна мар, ыттисен те "çăматăллă" чăхчĕп пур.

10 ытла кăркка урамрах çӳрет. Апат парсан таврана сас кăларса çитсе те тăчĕç. Тыр юратса çиеççĕ. Çăмарта пуçланă амасене уринчен çиппе çыхса паллă тунă – капла сăнаса тăма çăмăлрах.

## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 20.09 | +15 | + 9 | |
| 21.09 | +17 | + 8 | |
| 22.09 | +18 | + 6 | |
| 23.09 | +18 | + 7 | |
| 24.09 | +18 | + 8 | |
| 25.09 | +13 | +10 | |
| 26.09 | +12 | + 9 | |




ÇЫН ТĂК ÇЫН

# Аслă вăрман шавĕн тыткăнĕнче

**Новый поселокри 87 çулти Анна аппа хăй пурнăçĕнче хура-шурне нумай курнă. Çăмăл пулман вăл вăхăтрисен кун-çулĕ. Тантăшĕсемпе пĕрле тырă вырнă, утă çулнă, вир çумланă... Выçлăх çулĕсене, вăрçă пуçланнă куна аса илсен халĕ те сисчĕвленет Анна аппа.**



Çемьери çичĕ ывăлпа пĕр хĕртен унăн çеç ĕмĕрĕ вăрăм пулнă. Арçын ачасем пĕрин хыççăн тепри вилнĕ. Ашшĕпе амăшĕ пачах пепкесĕр тăрса юласран шикленсе Аннана çуралсанах урăх ятпа, Чĕкеç тесе чĕнме тытăннă. Чирсене парăнман хĕр пĕрчи, сывлăхлă çитĕннĕ. Çавăнпа ăна паян кунччен ял тăрăхĕнче икĕ ятпа чĕнеççĕ. Чĕкеç аппа темĕн тĕрлĕ юптару, сăвă пĕлет, ял тăрăхĕнче иртекен уявсенче халăха пĕрмаях вуласа савăнтарать тени илсе çитерчĕ мана ун патне.

Пире кантăкран курса урама çавракa питлĕ, тăпăл-тăпăл та ăш пиллĕ кинеми тухрĕ. Хăй çулĕнчен чылай çамрăк курăнать вăл. Кил умне типтерлĕн купаласа хунă пĕренесем çине вырнаçрăмăр. Эпĕ ыйтнипе Александр Галкинăн «Шанми шанчăксăр» юптарăвĕпе паллаштарчĕ малтан.

– О, арăслан,
Сана курманни
шăпах çĕр çул паян!
Мĕнле пурăнатăн, тăванăм,
Еплерех чупан?
Пурăнатăп-ха, çӳретĕп,
Ку таранччен
пĕрре те такăнман.
Апла замсемпе помсем
лайăх ĕçлеççĕ ĕнтĕ сан.
Паха ĕçлеççĕ, кăмăллă ялан... – пуçламăшĕнчен мĕн вĕçне çити пĕр такăнмасăр каласа кăтартрĕ Анна аппа. Шӳте лайăх ăнланаканскер пирĕнпе пĕрле хăй те ахăлтатсах кулчĕ. Нихăçан та кивелмен, паянхи пурнăçпа килĕшсе тăракан юптарăва Анна Семеновна хăй те питĕ юратать. Польша поэчĕн А.Мицкевичăн «Иккĕленӳ» сăввине те хумханмасăр итлеме çук. Чĕре витĕр тухнă йĕркесене вуланă май Чĕкеç аппа хăй те пăлханчĕ. Вăл та çамрăк пулнă, вăхăтĕнче вăл та юратнă. Ахальтен мар мăшăрне Куçмана ăшшăн аса илсе лармарĕ пуль. Юптарусемпе сăвăсене мачча тăррине хăпартса хунă кивĕ журналсенчен вĕреннĕ кинеми. Ятарласа мар, пĕр-икĕ хутчен вуласа тухнă та ас туса юлнă.

Анна Чулахова колхозра бухгалтер-кассирта ĕçленĕ. Ача чухне хĕр ача учитель пулма ĕмĕтленнĕ. Шкул хыççăн тӳрех Канашри педагогика училищине çул тытнă. «Икĕ курс йĕркеллех вĕренсе пĕтертĕм. Виççĕмĕшĕнче шкула практикăна каймаллаччĕ, манăн вара тăхăнмалли çук, аннен çĕтĕк кĕрĕкĕ кăна. Вĕренме пăрахрăм, урăх каймарăм. Çапла учитель пулаймарăм», – хăй ĕмĕтне пурнăçа кĕртейменшĕн кулянса калаçрĕ Анна Семеновна.

Мăшăрĕ вилнĕ хыççăн пĕчченех пурăнать вăл. Икĕ хĕрĕнчен пĕри Шупашкарта, тепри ял çумĕнчи поселокра тĕпленнĕ.

Пӳрт лартма ĕлĕк те, халĕ те çăмăл пулманни пирки сăмах хускатрĕ Анна аппа. «Манăн хĕр чухнех ĕне сутнă укçа пурччĕ. Упăшка водительте ĕçлетчĕ. Çапла саплаштаркаласа иксĕмĕрех çурт лартрăмăр. Çĕнĕ пӳрте сакăр çултан тин кĕтĕмĕр. Йывăр пулсан та пурнăç илемлĕччĕ çав ун чухне. Телейлех пулнă, килĕшӳре, пĕр-пĕрне ăнланса кун кунланă. Пуçра ĕç шухăшĕ кăна пулнă», – сăмах çăмхине сӳтрĕ те сӳтрĕ Анна аппа.

Вăрмана хирĕçех унăн пӳрчĕ. Тĕлĕнмелле ырлăх кунта, ытармалла мар илемлĕ! Тух та çырла-кăмпа пуçтар, мăйăр тат... Сывлăшĕ калама çук уçă! Çурт умĕнчи пилеше юратать кинеми. Ку йывăç сăваплă пулни, çав вăхăтрах усал-тĕселтен сыхлани, ăна кашни килтех лартмалли пирки каларĕ.

Анна аппа килте ларма юратмасть, уçă сывлăшра утса çӳресе сывлăхне çирĕплетет. «Ватă шăм-шак хăвăрт хытать, ытларах хускалмалла», – тет вăл. Хăйне йăпанмашкăн чăхсем тытать, йытă-кушак усрать. Пахча çимĕç лартса ӳстерет. Тăвату мăнук унăн, мăнук ачисем те пур.

Анна аппапа аслă вăрман шавĕпе кĕрхи сарă çулçăсен асамлă ташшин тыткăнĕнче самаях киленсе лартăмăр. Вăл вулакан сăвăсемпе юптарусене пĕр вĕçĕм итлес те итлес килчĕ. 90 çулалла утаканскер лайăх ас туса юлма пултарни тата манса кайманни тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те мана. «Турă сывлăх парсан пурăнăпăр-ха, татах та тĕл пулăпăр-ха», – тесе сыв пуллашрĕ манпа.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ВУЛАКАН ÇЕМЬЕ

# Хресчен пурнăçĕ çăмăлланать

**"Трактор е трицикл çине ларса пăхас-и?" – Лазаревсен килĕнчи техникăна курсан манăн пуçа çакнашкал шухăш пырса кĕчĕ. Унашкаллине урăх ниçта та курман. Иккĕшне те кил хуçи хăй пуçтарнă. "Минск" мотоциклтан ăсталанă трициклпа ним мар 3 михĕ çĕр улми е тырă турттарма пулать. Кур-ха, 1982 çулта илнĕскер халĕ те юрăхсăра тухман. Пĕр 15 çул каялла ăна арçын хăйне евĕрлетнĕ, хайхискер иккĕ мар, виçĕ урапаллă пулса тăнă. Трактор та хуçалăхра çав тери кирлĕ. Кирек хăш самантра тапрат та – ĕçе пуçăн. Килти техника хресчен ĕçне самаях çăмăллатать. Ĕлĕк, ахăртнех, çакнашкал ырлăх çинчен ĕмĕтленмен те. Тем тесен те пуян тавра курăмлă халăх пурăнать пирĕн тăрăхра.**

"Кĕнеке вулани ăс-тăна аталантарать, тĕрлĕ хатĕр ăсталама пулăшать", – калаçăва пуçлать Геннадий Григорьевич кил картинчи тата пахчари техникăна кăтартнă май. Тепĕр трактор пуçтарма тĕллев тытнă вăл. Ун чухне ывăлĕ Алексей те айккинче юлмĕ. Вăрттăн калас тăк – ландшафт архитекторне вĕреннĕ çамрăк чечек юратать. Пахчана илем кӳрекен ӳсен-тăрана хăех лартса ӳстерет. Çынсен çук чечек вăрри тупса илме тăрăшать. Çакна ыттисем те тӳрех асăрхаççĕ. Ахальтен мар тĕрлĕ тĕспе куçа туртать çак хитрелĕх.

Вăрмар районĕнчи Мăнçырмари çак çемье кĕнеке нумай вуланипе уйрăлса тăрать. Çакна çирĕплетекен дипломсем те пур вĕсен. Хăйсем калашле – пуриншĕн те телевизор курасси мар, çĕнĕ литературăпа паллашасси кăсăклăрах. Çĕнĕ технологисен ĕмĕрĕнче йышпа вулакансем сахалланса пыраççĕ. Телевизор мар тăк Интернет илĕртет нумайăшне.



Светлана Савиновна чăвашла кĕнеке илсех тăрать. Çавăнпах литературăра тарăн йĕр хăварнă тата хальхи авторсене никамран лайăх пĕлет. Хаçат-журнал та тăтăш вулать. "Ĕçпуç мĕнпе вĕçленнине пĕлмесĕр ыйхă та килмест", – тет вăл. Вырăслисенчен детективпа юрату романĕсен тĕнчи интереслĕрех уншăн.

Икĕ ача пăхакан Татьяна хулăн çи-пуç тăхăнмасăрах урама вĕçтерсе тухрĕ. Чăнах, шалти хĕрӳлĕх ăшătать çакăр амăшне. Икĕ çулти Димăпа ултă уйăхри Лизăшăн хальлĕхе кĕнеке тĕнчи ют. Вăхăт хăвăрт иртет – кĕçех вĕсем те сас паллисем вĕренме пуçлĕç. Кăшт çирĕпленсенех тĕпренчĕкĕсене амăшĕ ялти библиотекăна çавăтса каясшăн. Пĕчĕккисене илĕртекен кĕнеке-журнал сахал-и унта? Кайран ачасене шкулта вĕренме те çăмăлрах пулĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ХАРСĂРРИСЕМ

# Кĕр яланах пуян килет

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

### Качака сĕчĕпе шурă кулач

Андреевсем сĕтлĕ качакине Йĕпреç районĕнчен илсе килнĕ. "Анне пĕчĕклех çăмарта сутма Хусана илсе каятчĕ. Кайран шурă кулач илсе çитеретчĕ. Мĕнешкел юратса çиеттĕм ăна", – аса илӳ аваăрне путать Петр Семенович. Халĕ, паллах, ĕлĕкхи пурнăç мар. Уншăн вара çаплипех качака сĕчĕпе шурă кулач – чи тутлă апат.

4 вăкăр самăртаççĕ вĕсем. Ĕне тытаççĕ. 20-е яхăн сурăх усраççĕ. Хăй вăхăтĕнче сысна çăвăрлаттарса сутнă. Ĕçлесе илнĕ укçапа ГАЗель туяннă. Çавнашкалах купăстапа çĕр улмине те тупăшлă вырнаçтарнă. Унсăр пуçне тырă, люцерна, çĕр улми çитĕнтерме ӳркенмеççĕ.

### Ачисене те пулăшасшăн

"3-4 сехетре тăрса выльăх-чĕрлĕхе апатлантараттăмăр. Унтан ĕçе тухса чупнă. Каçхи 5-6 сехетре тин киле таврăнаттăмăр", – теççĕ канлĕх курман Андреевсем. Малтан, паллах, хăтлă йăва çавăрма, ытлă-çитлĕ пурăнма ĕмĕтленнĕ вĕсем. Мĕн кирли йăлтах пур ĕнтĕ. Пур пĕрех Петр Семеновичпа Зоя Ивановнăн чун туличчен канма вăхăт çук. "Халĕ ачасене пулăшас килет", – пĕр саслăн ăнлантарать ашшĕ-амăшĕ.

Мускавра хваттер туяннă ывăлĕ Тит мăшăрĕпе яла килнĕччĕ. Вĕсем те тăван тăрăхрах, сывăх çыннисенчен инçе мар, хăйсене ятăн çурт лартнă. Шăпах шалти ĕççене пурнăçлатчĕç.

Хĕрĕ Марина та çемье телейне тупнă. Вĕсем те мăшăрĕпе иккĕшĕ хваттер илесшĕн.

### Хĕр йĕрĕ хыççăн...

Петр Семеновичпа Зоя Ивановна пĕр-пĕрне пулăшса пыраççĕ. Çавăнпах пур ĕç те ăнса пырать вĕсен. Вăхăт иртнĕçемĕн юрату сĕвĕрĕлет теççĕ. Андреевсене сăнасан апла калаймăн: арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрин çине епле ытараймасăр пăхать.

"Вăрмарта бухгалтерта ĕçлеттĕм. Пĕрре кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче столовăя кĕнĕччĕ. Черетрех пĕр каччă куç илмесĕр сăнанине асăрхарăм. Паллашрăмăр. Çав кун ĕçрен тухнă çĕре мана кĕтме пырса та тăнă хайхискер. Кайран тин пĕлтĕм: столовăйран тухсан юлташне ман хыççăн янă вăл", – йăл кулса каласа кăтартать Зоя Ивановна. Çамрăксем уйăхранах пĕрлешнĕ.

"Халĕ çак килте мăнуксем чупнине курас килет", – ĕмĕтленеççĕ Андреевсем. Йыш хушăнни, чăнах, капашсăр пысăк савăнăç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ташăра – пурнăç, илем...

Татьяна НАУМОВА

**Общежитире пурăнатпăр. Чăвашĕ те, вырăсĕ те, тутарĕ те, узбекĕ те пур кунта. Килĕштеретпĕр темелле. Анчах паян сăмахăма тăванла пурăнни пирки мар-ха, чăваш культури çинченех пуçарас килет. Мĕн чухлĕ калаçатпăр-çыратпăр пулĕ, кашнинчех чун кӳтсе килнипе сăмахлатпăр – шел те, хуллен чакса пыратпăр!!! Шутпа та, чунпа та... Сĕр çинчи чăвашсен йышĕ сахалланни темиçешне кăна пăшăрхантарать паян. Пĕр-иккĕн çеç пĕве пĕвелес тенипе шыв тулса лараймĕ. Аяккăн-маяккăн çӳремесĕр хальхинче чунăма мĕн канăçсăрлантарнине пĕлтересшĕн.**

**Савăт-сапа çăватăп хайхи. Коридорта пĕр пысăк кухня пирĕн. Пĕри апат пĕçерет, тепри темĕн тасатать, виççĕмĕшĕ кам мĕн калаçнине итлеме тухнă... Черетлин вара паян савăнăç. Ача садне çӳрекен хĕрĕ ташă кружокне кăмăллать иккен. Хисеп хутне тивĕçнĕ хайхискер. Эстрада ташшисемпе лайăх хиркеленет имĕш. "Маттур!" – терĕ пĕри. "Ырламалла!" – хутшăнчĕ тепри. "О-о-о! Эстрада ташши! Ахаль-махаль чăваш ташши çеç мар", – мухтарĕ виççĕмĕшĕ. Чунра темле тарăхупа вĕчĕрхенӳ çуралчĕ. Çавах калаçăва хутшăнас темерĕм. Каçа хирĕç чĕрре кĕрес килмерĕ. Шухăша путса çывăрма выртрăм. Кăмăла хуçнă калаçу нумайччен пуçран тухмарĕ.**

**Мĕншĕн-ха несĕлсен культурине хаклама пăрахатпăр? Е халăх ăсĕнче чăваш ташши урай ишĕлесле тăпăртатнипе çеç çыхăннă-и? Айван та-çке ăсхакăлăмăр.**

**Еплерех илемлĕ ташшисем! Çакна курма пурне те пӳрмен-тĕр çав. Тепĕр тесен чăвашăн çеç мар, ытти халăхăн та культури, йăли-йĕрки пуян. Вĕсенче туйăмлăх, кăмăл-сипет туллин палăрать. Кашни ташă – хăй уйрăм пурнăç. Обществăра çакна курмаилтме, чĕре витĕр кăларма пултаракансем чакаççĕ-тĕр. Ташшисем вара кашнин расна. Тумĕ те, кĕвви те, ритмĕ те пĕрешкел мар. Ку хăй пысăк пуянлăх.**

**Тен, эпĕ ахалех вĕчĕрхенетĕп? Тен, эпĕ пачах тĕрĕс мар шухăшлатăп? Тен, паян чăн та эстрада ташши пахарах? Çук, темле пулсан та аваллăха манăçа кăлармалла мар. Вĕсене асра тытмалла тени йăла-йĕркепе çеç пурăнмаллине пĕлтерместçке. Çĕннине те шĕкĕлчемелле, паллах, тĕпчемелле, алла илмелле. Анчах историе асра тытмалла.**

**Хама канăçсăрлантаракан ыйтупа Халăх пултарулăх çурчĕн халăх пултарулăх уйрăмĕн ертӳçипе Светлана Лаврентьевăпа канашларăм. "Халăх ташшине ташлакан халĕ питĕ сахал. Çамрăксем эстрадăна кăмăллаççĕ темелле-и? Сиккелесе хускалма чылай çăмăлрах-çке. Халăх ташшинче вара – чăвашăн-и, вырăсăн-и, тутарăн-и – чи кирли – пластика. Ансатах мар. Турă пани кирлĕ ташлама. Сцена çине тухиччен нумай тарламалла", – терĕ вăл.**

**Япăххипе лайăххи яланах юнашар çӳреççĕ-ха. Çавăнпа та савăнмалли те пурах. Пултарулла ывăлхĕр сахал мар-ха чăвашăн. Акă, сăмахран, РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Музыкантов ертсе пыракан "Сувар" ташă ушкăнĕ вăтăр çул ытла сцена çинче. Репертуарĕ мĕн тери пуян! Республикăра вĕсем çитмен кĕтес çук. Раççейре çеç мар, чикĕ леш енче те палласçĕ ушкăна. Ташшисем мĕнешкел илемлĕ! Çавна нивушлĕ асăрхамăн?**

**Манăн эстрада ташшисене кăмăллакансене хурлас килмест. Кашнин хăйĕн чун туртăмĕ. Вĕсене пĕр тараса çинче вичме хăтланни вĕчĕрхентернĕрен çеç сӳтетĕп сăмах çамхине. Ăна халăх ташшипе танлаштармалла мар тесшĕн.**

**Республикăра ачасен те, аслисен те ташă ушкăнĕсем çителĕклех. Тĕрлĕ енлĕ аталанаççĕ вĕсем. Акă Çĕнĕ Шупашкарти "Химик" культура керменĕнчи ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Илья Лювов ертсе пыракан ачасен халăх ташшисен "Телей" ансамблĕ те аван ĕçлет. Эпĕ пĕлменни-илтменни те темĕн чухлех. Тăван халăхăмăра, унăн историне, чĕлхине, йăли-йĕркине хаклама, упрама пĕлнишĕн тата ăнтăлнишĕн хисеплетĕп вĕсене.**

АСĂРХАНĂР!

# Чăваш вăрманĕсенче – çĕнĕ сăтăрçă

Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем пĕлтĕр кăна-ха чăваш çĕрне çĕпĕр пурçăн хурчĕ çитме пултарасса асăрхаттарнăччĕ. Уйрăмах пушарсене пула шар курнă вăрмансенче хăрушлăх пысăккине палăртнăччĕ.

Ятне пăхсан ку мур пирĕн тăрăха çитессе ĕненес те килмест. Ара Çĕпĕрпе Чăваш Ен пĕрпĕринчен аякра-çке. Анчах кӳршĕллĕ Мари Республикинче çак сăтăрçа тахçанах асăрханă. Киров облаçĕнче те карантин фитосанитари режимне çирĕплетнĕ.

Çак тата сиен кӳрекен ытти хурт-кăпшанка тупса палăртас тесе республикăра çулсерен 500 гектар вăрмана феромон капкăнĕсем лартса тĕпчеççĕ. Кăçал Сосновка участок лесничествинче капкăна пурçăн хурт çакланнă.

Сăмах май, асăннă управлени специалисчĕсем вăрмансенчи лару-тăрăва капкăнсем лартса çулсерен уçăмлатаççĕ. Çапла хăшпĕр районта йывăççене лубоедпа усач тапăннине пĕлнĕччĕ.

Паллах, пурçăн хурта сарăлма парас мар тесе çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăннă. Çак сăтăрçă лăсăллă йывăççене кăмăллать, çулçăллине те тиркемест. Унăн йышлăхĕ ӳснĕ вырăнта хура вăрман пĕтме пуçлать. Йывăçсем çĕрсе, курăк ӳссе пынă май çак лаптăксем шурлăха çаврăнаççĕ.

Иртнĕ çĕр çулта çĕпĕр пурçăн хурчĕ 13 млн гектар тайга вăрманне пĕтернĕ. Çакă ытти хурт-кăпшанкă пĕтĕмĕшле шар кăтартнă калăпăшран 5 хут нумайрах!

Çĕнĕ "хăна" – сарă-хăмăр е сăрă-хура пысăк лĕпĕш. Малти çунаттисем çинче тĕттĕмрех йĕрсемпе шурă пысăк палăксем асăрхама пулать. Çăмартисене лăсă çинче хăварать, хунасах кайсан типĕ туратсем, курăксем тата ытти çĕрте те курма пулать. Хурт 13-15 кунран аталанса çитет.

Патшалăх аслă инспекторĕ Елена Покровская çирĕплетнĕ тăрăх, çак сăтăрçă республикăна вăрман продукцийĕпе те лекме пултарнă.

Асăннă хурт-кăпшанкă куç тĕлне пулсан специалистсемпе çыхăнма ан ӳркенĕр. Малтанах тупса палăртни унпа тухăçлă кĕрешме пулăшать.

Надежда ВАСИЛЬЕВА.

ТЕАТР

# Çĕнĕ спектакльсемпе савăнтарĕç

Театрсем сезон тин çеç хупрĕç пек – черетлине уçма та вăхăт çитрĕ. Висĕм кун акă куракана Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ хапăлларĕ. Кăнтăрла унта "Чĕрĕ сăмах" спектакль курма май пулчĕ. Сăмах май, ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн грантне тивĕçнĕскерне Геннадий Айхи юбилейне халалланă. Çĕнĕ сезонра çак спектакле кĕме туянакан билетсенчен пухнă мула Айхи фондне ярĕç – ку хăйне евĕр çĕнĕлĕх пулĕ. Каçхине вара куракансем çĕнĕ спектакле – Валерий Иовлевăн "Пирĕн атте авлана-а-ать!" камите – хаклама пултарчĕç.

Тата мĕнпе савăнтарĕ-ха çĕнĕ 82-мĕш сезон? Паллах, премьерăсемпе. Часах сцена çине Александр Пăрттан "Ылтăн кĕрӳ" камичĕ тухмалла. Унăн режиссерĕ – Вячеслав Оринов. Çавăн пекех Александр Хмытăн "Çерем çинчи çисĕм", Василий Шукшин хайлавĕсем тăрăх "Чун пирки манас марччĕ" тата ытти ĕçсене хаклама пултарĕ куракан.

Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче театр артисчĕсем Калмăк Республикине çула тухĕç, унта вĕсем "Один дома", "Собаки", "Суя пурнăç", "Тăм тивнĕ чечексем" спектаклĕсене илсе кайĕç. Калмăк наци драма театрĕн çамрăкĕсем те çак вăхăтра тĕп хуламăра хăнана килĕç. Чăваш Ен халăхне "Араш", "Сказки Белого Месяца", "Сердце матери" спектаклĕсемпе паллаштарĕç.

Анна НИКОЛАЕВА.

ИНКЕК

# Йĕркене пăхăнмасан...

Ятарлă органсенчен çуртри планировкăна улăштарма ирĕк илмесĕр юсав ĕçĕсем ирттерме юрамасть тенине маларах хăшĕпĕри хăлхана та чикместчĕ пулсан, халĕ çак йĕркене пăхăнмах тивнине ăнланчĕ-тĕр. Çакна авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарти Петров урамĕнчи 9-мĕш çуртри инкек те çирĕплетрĕ. Ара шăпах йĕркене пăснăран, технологисене пăхăнмасăр пӳлĕмсенче душ кабинисем вырнаçтарнăран стенасем нӳрленнĕрен ишĕлнĕ те çурт. Пилĕк хутлă, висĕ подъездлă, 164 хваттерлĕ çурта 1962 çулта хăпартнă. Эксперт комиссийĕ строительство материалĕсем пахалăхсăр пулнине те, раствор хатĕрлемелли технологие пăхăнманнине те палăртать.

Штукатурка хăпăнма, кирпĕчсем ванма пуçласан хыпăнса ӳкнĕ кунта пурăнакансем. Инкек пирки тӳрех систернĕ, яваплă органсем те çийĕнчех пырса çитнĕ, Правительство çуртĕнче чрезвычайлă лару-тăрăва сирес енĕпе оперативлă штаб йĕркеленĕ. Çăлавçăсемпе полици çынсене эвакуациленĕ, 2-мĕшпе 3-мĕш подъездра пурăнакансен пурлăхне илсе тухма пулăшнă. Çутă, газ сӳнтернĕ, шыв пама чарăннă. Пĕрремĕш подъезда кĕме пачах та чарнă. Медиксемпе психологсем те кунтах çӳренĕ. Инкек вăхăтĕнче çуртра 153 çын пулнă. Телее, аманнисем çук.

Шар курнисене хулари вĕренӳ заведенийĕсен общежитийĕсенче вăхăтлăх хӳтлĕх тупса панă, кунне висĕ хутчен тӳлевсĕр апат çитереççĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыгов асăннă çуртран эвакуациленнĕ çынсемпе тĕл пулсан йывăрлăхра никама та пăрахмасса, кашни çемьепе уйрăммăн ĕçлессе, пур ыйтăва та Раççей тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн татса парасса пĕлтернĕ. 50-60-мĕш çулсенче хăпартнă çуртсене тĕрĕслесе пĕтĕмлетӳ тумаллине те асăннă хула ертӳлĕхĕ.

Татьяна НИКОЛАЕВА.

СУЙЛАВ

# Ял тăрăхĕнче – çĕнĕ пуçлăхсем

Иртнĕ вырсарни кун, авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче Раççейре суйлав кунĕ иртрĕ. Пирĕн республикăра та висĕ ял тăрăхĕн пуçлăхне палăртнă.

Шупашкар районĕнчи Çырмапуç ял тăрăхне малашне "Пĕрлĕхлĕ Раççей" политика партийĕн кандидачĕ Рамиль Гельметдинов ертсе пырĕ. Тăвай районĕнчи Чутей ял тăрăхĕн пуçлăхĕ – Григорий Кукков. Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн "тилхепине" тытса пыма Галина Ефимовăна шаннă.

Елена МИХАЙЛОВА.

ÇУТ ÇАНТАЛĂК

# Кедр аллейи пысăкланнă

Атăл леш енче йывăç лартас ĕç малалла пырать. Çавна май çуннă вăрманлăх çĕнĕрен вăй илет. Организацисемпе уйрăм çынсен пулăшăвĕ уйрăмах витĕмлĕ.

Ĕнер, тĕслĕхрен, Шупашкар вăрманçисемпе çут çанталăка юратакансем 180 кедр лартса хăварнă. Вĕсем тăрăшнипех çак лаптăкра çăкапа вĕрене те йышланнă.

Мария РОМАНСКАЯ.

ÇЎПÇИПЕ ХУПĂЛЧИ

# Телей куçĕ умри çула çутатать

**Юлашки вăхăтра хулара мар, ялта чăвашла калаçма манса пыни, паллах, кăмăла хуçать. Çамрăк ăру тăван чĕлхепе хутшăнасшăн мар. Унашкаллине, чăн та, чун йышăнмасть. Шупашкар хĕрне Людмила Александровăна тĕслĕх вырăнне илсе кăтартас килет. Вăл хулара çитĕннĕ пулин те, такампа та чăвашла пĕр чĕлхе тупĕ.**

"Çуллахи вăрăм каникулта Шупашкар районĕнчи Шăнкасра хăналаннă. Шăпах çавăн чухне тăвансемпе, ял-йышпа чăвашла калаçма хăнăхнă", – ăнлантарать вăл.

Кайран, туя кайсан, юлташ хĕрĕн пиччĕшĕ Александр куç хывнă ăна. Тĕрĕссипе, пулас хунямăшĕ хула хĕрне кин тăвасшăнах пулман. Кайран, Людмила çывăх тусĕ патне тăтăш çӳреме пуçласан тин, хĕрарăмăн шухăшĕ улшăннă. Ĕçчен те вăр-вар чиперкке кирек камăн кăмăлне те çавăрĕ.

Тăрăнти культура çурчĕн пуçлăхĕнче тăрăшакан Александр Вячеславович Шупашкара тăтăш килме пуçланă. Чун çунтармăшне кинона чĕннĕ вăл. Ак хайхи хыпса илнĕ юрату кăвайчĕ. Кăçал чĕвĕл-чĕвĕл кăвакарчăнсем пек мăшăрăн куç тулли хĕрĕ çемье çавăрчĕ. Александр Вячеславовичпа Людмила Геннадьевна кукашшĕпе кукамăшĕ пулма ĕмĕтленеççĕ.



Пушă вăхăт тупăнсанах çыхма ларать хĕрарăм. Унăн алли витĕр тухнă кашни хатĕр килĕшӳллĕ.

Кил хуçи арăмĕ çĕр ĕçне юратать. Хăйсен дачине чечек утравне çавăрнă вăл. Çавăнпах унта канас та, ĕçлес те килет.

**Мария РОМАНСКАЯ.**
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

ПУЛАТЬ ВĔТ!

# Эсĕ – мана, эпĕ – сана!

Хăш-пĕр чухне пуç çаврăннăн туйăнать хула урамне тухсан. Мĕн чухлĕ автобус, троллейбус, ГАЗель... Пурин валли те пассажир çитет-ши вара? Тата хăшĕ ăçталла çул тытать – пĕлсе пĕтер...

«Вокзала çити каятпăр! Вокзала çити!» – илтĕнет кашни чарăнура. Тарăхсах çитрĕç троллейбус кĕтекенсем. Хăшĕсем салона кĕреççĕ кăна, пĕлтерĕве илтсе каллех кăмăлсăррăн каялла тухаççĕ. Мĕн тумалла пурин те вокзалра? Манăн вара кирлĕ çĕре хăçан çитмелле? Çумăр çăвать. Кĕрхи сивĕ çил çанçурăма чĕтретет.

Акă тепĕр троллейбус кĕрлеттерсе çитрĕ. Алăксем уçăлсан пире йăлăхтарнă сăмахсем илтĕнмерĕç-ха кунта. Çавăнпа та хăюллăнах шалалла талпăнтăмăр. Çулланнă пĕр хĕрарăм кăна, пит çăмартине сăмса тутрипе тытнăскер, темшĕн пирĕнпе кĕмерĕ, калла-малла утрĕ.

– Бабуля, лар часрах! – илтĕнчĕ çав самантра троллейбусран.

– Ак тата, водитель чăвашлах чĕнет. Тăрса юлас марха, – мăкăртатса йăпăр-япăр кĕчĕ кăмăлĕ уçăлнă хĕрарăм. Анчах ун патне кондуктор пырсан хăйне япăх туйнине пĕлтерчĕ.

– Шăл сиплеттерме каятăп-ха, питĕ ыратать. Кĕçех тухатăп. Лартса кай-ха пĕррелĕхе укçасăрах, – тархасларĕ вăл.

– Песплатнă мĕн пур халĕ? Общество транспорчĕ те кашни метршăн укçа шутлать. Мĕн чухлĕ куратăп эпĕ сирĕн пеккисене кунсерен! Çĕр грамм та ярса памастăр хуть. Кам пулса ĕçлетĕн-ха?

– Маляр.

– Вăт эсĕ те кашни тăваткал метра шутласа «варалатăн». Сăрруна перекетле те пĕр банкине ман пата йăтса кил. Эсĕ – мана, эпĕ – сана. Туслă пулăпăр. Унсăрăн тепрехинче... Хăв пĕлетĕн! Лайăх ас туса юлтăм сана...

– Пулать-пулать, – ларкăч çине меллĕн вырнаçса хуравларĕ хĕрарăм.

**Алевтина ВАСИЛЬЕВА.**
Шупашкар хули.

КУЛЬТУРА

# Манăçа кăларас килменнипе

Саратов облаçĕнчи Балаково хулинчи Василий Николаевич Якушова, тепĕр майлă Миккуль Ваççине, Пушкăртпа Тутар Республикисенче, Пензăпа Самар, Чĕмпĕр облаçĕсенче палламан çын çук та пулĕ. Чăваш ялĕсем тăрăх фольклор, чăваш юррисем пуçтарса çӳрет вăл. Асаннесемпе кукамайсен юррисене çыртарса илсе дисксем кăларать. Шкул ачисене те айккинче хăвармасть. Хитре те уçă саслисене шыраса тупса чăвашла юрлама хистет. Хăй шутĕнчен Пушкăрт чăвашĕсем валли кăна "Пултаруллă чăвашсем" тата "Ача-пăча юррисем" ятпа икĕ альбом /DVD диск/ кăларнă Василий Якушов предприниматель. Аякри чăвашсем ĕмĕр асăнмалăх парнене хапăл тусах йышăнни пирки каларĕ. Шкул пĕтерсенех электрике, кайран инженера вĕренсе тухнăскер çулсем иртнĕ май филолог пулма тĕв тытнă Василий. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн Чĕмпĕрти филиалне çул тытнă. Чăваш чĕлхи учителĕ вăл халь.

"20 çулта чухне эпĕ пĕр чăваш сас паллине те палламан. 30-та тин хам тĕллĕн вулама-çырма вĕрентĕм", – каласа кăтартать юрă альбомĕсен авторĕ.

Балаковăра пурăнакан пĕр кинеми православи календарĕ ыйтнă унран. Чăвашла кăларса парнеленĕ ăна Якушов. Чăваш йăли-йĕркипе, юррисемпе кăсăкланасси çакăнтан пуçланнă та. 1990 çулсенче радиопа Балаковăра тăван чĕлхепе кăларăм ертсе пынă.

"Альбомсене кредит илсе кăларатăп. Диаспорăри чăвашсен юрри-кĕввине манăçа кăларас килменнипе тытăнтăм çак ĕçе. Çул çӳреме, кашни чăваш ялне çитме пĕртте çăмăл мар", – тет Василий Николаевич.

**Елена АТАМАНОВА.**

ТАРĂХТАРЧĔ!

# «Ӳсĕр» галстук

Тарăн сăрт хĕррипе иртекен яп-яка та сарлака асфальт çул çинчи арçын самаях инçетреччĕ пулин те васкакан Тая хăйсен хушшине часах çывăхлатрĕ. Умра майĕпен утаканни, кĕç-вĕç йăванса каяс пек тайкаланаканскер, тепре пăхнă çĕре куçран çухалчĕ. Пăсланчĕ тейĕн... Çав самантра çул хĕрринчен аяларах этем ури мĕлтлетнĕнех туйăнчĕ. Нимĕн ăнланма ĕлкĕреймен Тая хăра-хăра анаталла пăхрĕ. Ахух! çухалнăскер чăнкă çĕртен кустăрма пек ĕрĕхтерет кăна, никам хăваласа çитеймĕ – кусать те кусать... Вăл тĕпсĕр çырмаран ниепле те чакаланса хăпараяс çуккине кура Тая пулăшу шыраса çывăхра кĕрлесе ларакан трактор еннелле чупрĕ. Трактористпа каялла çитнĕ çĕре... лешĕ нимĕн пулман пек асфальт хĕрринче мăшлатса выртать. Пичĕ-куçĕ вараланса палăрми пулнăскере Тая тинкererех пăхрĕ те... Упăшки?! Галстукĕ те, костюмĕ те унăнни пекех. Тăруках вăй пĕтнипе чутах сăртран тĕшĕрĕлетчĕ – шарт сиксе вăранса кайрĕ хайхи. Çамка çине шултра тар пĕрчисем тапса тухнă. Хăрушă тĕлĕк сĕмлĕхĕнчен çийĕнчех хăтăлаймасăр темĕн пăшăлтатнă хушăра тутлăн çывăракан мăшăрĕ те тăрса ларчĕ. Сехете пăхрĕ. Машина çитмеллине аса илсе васкавлăн тумланчĕ. Шкапра тирпейлĕн çакăнса тăракан галстуксенчен алла лекнине туртса кăларчĕ те тĕкĕр умне пычĕ.

– Тупата, каллех çак путсĕр Çакланчĕ, – мăкăртатрĕ вăл. Çакас-и, çук-и тенĕ евĕр алăра çавăркаланă хыççăн çуха айне çирĕплетсе те хучĕ.

Ашшĕпе яланах пĕр шухăшлă пĕчĕк Стасик хăш-пĕр галстука ят та панăскер, ку хутĕнче те:

– Аттеçĕм, эсĕ паян ура явкаласа килесшĕн-и? Пĕлетĕн вĕт-ха, ку санăн – «ӳсĕрри», – терĕ галстук вĕçĕнчен туртса. – Салт ăна, «телейлине» паратăп.

– Тен, чăнах та тĕрĕс... Мĕншĕн итлемелле мар, – ывăлĕ хутне кĕчĕ амăшĕ. – Эпĕ те ирхине тĕлĕкре сана шăпах çак галстукпа ӳсĕр куртăм. Тĕпсĕр çырмаран хăвах тапаланса хăпарни лайăха систеринччĕ. Эрехсăра шыв пек юхать те... Епле хăтăлмалла çав авăртан?

– Ăнланатăп-ха эпĕ сире, тĕпренчĕкĕмсем, анчах васкатăп-çке, машина çитрĕ те пулĕ, – тесе алăка уçрĕ арçын.

– Курăпăр-ха еплерех килнине, – ăсатрĕç килтисем.

Каç пулса вăхăт чылая кайрĕ. Кил хуçине кĕтекен çемье çывăрма васкамарĕ. Галстукли сас памарĕ-ха.

Кĕтнĕ шăнкăрав сасартăк янăрасан Тая пĕр иккĕленмесĕр:

– Кто стучится в дверь моя? – шӳтлерĕ яланхилле.

– Это – я, мужик твоя, – пулчĕ хурав.

Çав вăхăтра Стасик чупса пычĕ те амăшне пӳлсе алăка уçрĕ. Вăйсăр куçĕпе сӳрĕккĕн пăхакан хĕрĕнкĕ ашшĕне çавăтрĕ. Лешĕ кĕнĕ-кĕменех «мăй çыххине» вĕçертсе айккинелле вăркăнтарчĕ.

– Стасик, пытар-ха çак улачăлана ăçта та пулин, шыва ĕмĕрлĕхе путар. Текех куç тĕлне ан пултăр вăл...

Арçын ача шăпах çакна кĕтнĕн, тарăхтармăша кĕсйине пĕтĕрсе чикрĕ те туалета шăвăнчĕ. Вăйпа туртса çурчĕ, чăмăртаса унитаза панчлаттарнă хыççăн щетка аврипе вирлĕн ислетрĕ. Çĕтĕкскер хăй çулĕпе кайтăр тесе шыва шарлаттарса юхтарчĕ. Лешĕ куçран çухалсан аллине çуса Стасик кăмăллăн вырăн ăшне чăмрĕ.

...Хăмпăланнă темле татăка ирхине унитазра курсан Тая ĕçпуç мĕн патне çитнине çийĕнчех ăнланчĕ. Хушша-хуппа кĕрес темерĕ-ха вăл, çапах та ывăлне систерчĕ.

Тĕлĕннипе куçне чарнă Стасик нумай шухăшламарĕ, йĕпескере щетка аври çине «лартрĕ» те урамри çӳп-çап савăтне тухса çатлаттарчĕ.

– Юхас та, путас та теместĕнтĕк çӳп-çап купинче çĕр эппин. – терĕ те вăрт çаврăнса утрĕ. Алăкран кĕрсенех ашшĕн асамлă галстукне – «телейлине» – шыраса тупрĕ, унăн костюмĕ çине хучĕ...

**Алина ПЕТРОВА.**



# Тăлăх ачасен пысăк уявě

Çěр-шыва хăватлăн аталантарма çирěп кăмăллă, хăюллă, вăйлă çамрăксем кирлě. Çакна çěр-шыв тата республика пуçлăхěсем лайăх ăнланаççě. Спорт – çирěп сывлăх никěсě те. Юлашки вăхăтра çěр-шывăмăрта массăллă спорт юхăмě вăйлăн аталанса пынине калама кирлех те мар. Сочире иртнě хěллехи Олимпиада, ГТО нормисене çěнěрен халăха таврăни, "Раççей йěлтěр йěрě", "Кěрхи кросс" евěрлě спорт ăмăртăвěсенче правительство чиновникěсемпе парламент депутачěсем хутшăнни – çакна çирěплетекен тěслěхсем. Ача-пăча спорчě те майěпен ура çине тăрать. Спортсменсене хатěрлекен ятарлă шкулсенче кăна мар, тěрлě шайри вěренӳ учрежденийěсенче çамрăксем хавасланса старта тухаççě. Тěслěхрен, Шупашкарти механикăпа технологи техникумěнче кăна кěрхи старта 400 ытла спортсмен хутшăнчě.

"Атăлçи спорт Олимпě" – федерацин Атăлçи округне кěрекен 14 регионти ача çурчěсенче пурăнакан 13-18 çулсенчи çамрăксен ăмăртăвě. Тěллевě



● СПОРТ ЛАПАМĚНЧЕ БАСКЕТБОЛИСТСЕМ.

пархатарлă унăн: ашшě-амăшěсěр тăрса юлнă çамрăксене ырă пурнăç йăлийěркине хăнăхтарасси, спорт юхăмне явăçтарасси, пултарулă спортсменсене тупса палăртасси, интернат шкулсен хушшинче туслă çыхăнăва йěркелесси. Унăн пěлтерěшне республикăри вěренӳпе çамрăксен политикин министерствин ача-пăча прависене сыхлакан тата попечительство ěçне йěркелекен пай пуçлăхě Светлана Сырмолотова тата та лайăххăн уçăмлатрě:

– Çак ырă юхăма – ача çуртěнче пурăнакан çамрăксен спартакиадине ěнтě – Раççей Федерацийěн Президенчěн Атăлçи округěн полномочиллě представителěн аппарачě, ПФОри гражданла обществăна аталантарассипе ěçлекен фонд, округри ěç тăвакан влаç органěсем, Чăваш Республикин



**Камилла Никитинăпа Ксения Порфирьева кун йěркине тренировкăран пуçлаççě: вěсен ирсерен сахалтан та виçě çухрăм чупмалла. Кăмăлне çирěплетсе çитернě ěнтě: 15 çула çитнě тантăшсем никам хушăвěсěрех тăраççě, хăвăрт тумланаççě те стадиона вěçтереççě. Темиçе минутран чупакансен ушкăнě йышланать: çан-çурăма вылятмалла чупакан хěрсене Ольга Васанккапа Настя Лебедева хуса çитеççě. Унтан Валерия Илларионова, Саша Николаев, Денис Васильев... Пěр-пěрне саламласа ал çапнă хыççăн чăн-чăн ăмăрту пуçланать: кам Александр Иванович тренер палăртнă финиш чиккине маларах чупса çитě? Вулакан сăмахăма камсем çинчен пуçарнине ăнланмарě пулě-ха? Кам вăл Камилла, кам вăл Александр Иванович? Уçăмлатам: сăмахăм И.Н.Ульянов ячěллě Пăрачкари ача çуртěнчи спортсменсем тата вěсене спортпа туслаштарнă Александр Иванович Николаев çинчен пырать. Шăпах Камиллăпа унăн тусěсем Александр Иванович ертсе пынипе Чăваш Республикин чысне авăн уйăхěн 13-14-мěшěсенче Олимп резервěсен Çěнě Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 3-мěш спорт шкулěнче иртнě "Атăлçи спорт Олимпě" спартакиадăра хӳтěлерěç.**

Правительстви пуçарнă. Спартакиада икě тапхăртан тăрать. Пěрремěш тапхăрě çу уйăхěн пěрремěшěнчен пуçласа авăнăн 15-мěшěччен тăсăлать. Иккěмěш тапхăрěнче чи пултарулă спортсменсем Атăлçи округěнчи спартакиадăна пуçтарăнчěç. Ăнлантăр пулě, Шурă Шупашкарта спартакиадăна 8 тěрлě ăмăрту кěртнě. Яшсемпе хěрсем мини-футбол /5-9 ача/, волейбол /6-7 ача/, стритбаскетбол /3-4 ача/, дартс /1 хěр ача, пěр арçын ача/, çăмăл атлетика эстафети /5 хěр ача, 5 арçын ача/, шашка /1 хěр ача, 1 арçын ача/, теннис /1 хěр ача, 1 арçын ача/, ишсе /1 хěр ача, 1 арçын ача/ ăмăртаççě. Пěрлештернě команда 30 çынран тăрать, – каласа пачě Светлана Юрьевна. – Чăваш Енěн пěрлештернě командинче Пăрачкаври тата Шупашкарти ача çурчěсенчи çамрăксем. Чи кěçěнни – çăмăл атлетикăпа эстафетăна хутшăнакан 13 çулти Ксения Порфирьева. Чи хастаррине палăртма та кăмăллă: республика командин капитанě 16-ри Алексей Грязнов. Леша – пуриншěн те ырă тěслěх, 3 ăмăртăва хутшăнать: ишет, шашкăлла, волейболла вылять.

Спартакиада Çармăсран, Чěмпěртен, Самартан, Тутарстанран, Пушкăртстанран килнě çамрăк спортсменсемшěн чăн-чăн спорт уявě пулчě. Вěсене Чул хуларан килнě Сергей Валенков, ЧР Правительство пуçлăхě Иван Моторин, Чăваш Енěн тěп инспекторě Геннадий Федоров, Республикăри вěренӳ министрěн пěрремěш çумě Светлана Петрова саламларěç, артистсем чăваш, тутар, пушкăрт ташшисемпе килентерчěç. Ольга Журавлева аэробика тренерěпе ирттернě флешмоба мěнле манăн тата!

Эх, курасчě сирěн ушкăнсем пěрпěриншěн "чирленине", урапа тапатапах пěр-пěрне хавхалантарнине.

"Маттур-р-р!", "Хăвăртрах-х-х!!!", "Пенза! Пенза!!!" Икě кун хушши кěрлерě спорт резервěсен шкулě.

– Эпир, ан тив, пěрлештернě командăпа мала тухаймарăмăр, анчах та саванăçě куç тулли, – терě пирěн корреспондента футбола выляса тара ӳкнě Дима Федоров. – Эпир çак пысăк ăмăртура туслăх çирěплěхне тепěр хут туйса илтěмěр. Пирěн командăри Савелий Куракин, Вадим Степанов, Артем Краснов, Дима Халапсин, Аполлон Солин – чăн-чăн футболистсем. Тата Хусантан пуçласа Пермь хулине çитиччен туссем тупрăмăр!

Димăна пӳлсех калаçăва Настя Лебедева хутшăнать:

– Пирěн хамăрăн "çăлтăр" та пур. Вăл – шывра ишсе 3-мěш вырăна тухнă Ирина Ильина. Ирина, маттур! Эпир санпа мухтанатпăр!

Спартакиада пěтěмлетěвěсемпе Светлана Сырмолотова тěплěн паллаштарчě.

– Чăваш Республикин команди Самара облаçěпе пěрле хисеплě 10-мěш вырăнта. Пьедестал çине Мордва /1-мěш вырăн/, Пушкăрт Республикисен /2-мěш вырăн/ тата Пермь крайěн /3-мěш вырăн/ спортсменěсем хăпарчěç. Ку вăл эпир выляса янине пěлтермест. Пирěн кӳршěсем вăйлăрах пулнине кăна çирěплетет. Эппин вěсенчен вěренсе пырăпăр. "О, спорт! Эсě – тăнăçлăх!", – тенěччě Юрий Озеров режиссер. Ача çурчěсенче çитěнекенсемшěн Шупашкарти спартакиада туслăх кěперě выранне пулса юлтăр. Тата... тата вěсен шăпине кăшт та пулин илемлеттěр. Ачасен хавхаланăвě спартакиадăра туллиех пулчě. Эппин, эпир хамăр тěллеве туллин пурнăçланă тесе калама пултаратпăр. Эпě çавăн пекех волонтерсене тата механикăпа технологи колледжěн студенчěсен ушкăнне тав сăмахě каласшăн, – терě Светлана Юрьевна.




● ЧĂВАШ ЕНĚН ПĚРЛЕШТЕРНĚ КОМАНДИ СТАРТ УМĚН.

Хăнасен шухăш-кăмăлěнче – ырри кăна.

– Пирěн республикăра спорта малти вырăна хураççě. Пекинри Олимпиадăра Мордовири çăмăл атлетсене пěр континент спортсменě те хуса çитеймерě, – терě Артем Квашнин.

– Спорт пурнăç çине ырă куçпа пăхтарать, – палăртрě Кировран килнě Ольга Панкрухина.

– Спорт уявне лайăх йěркеленине палăртас килет. Мухтав, Шупашкар! – ăшă куллине пытармарě "Атăлçи спорт Олимпě" спартакиадăна 3-мěш хут хутшăнакан Саратов хěрě Валентина Трегуб.

**Анатолий АБРАМОВ.**
Надежда Григорьевăпа
Ольга Хуморова
сăн ӳкерчěкěсем.



● АКĂ ВĚСЕМ – СПАРТАКИАДА ГЕРОЙĚСЕМ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Пулăпа çăмарта салачĕ



**2 кишĕр, пуçлă 2 сухан, пĕçернĕ 4 çăмарта, 1 банка çури тунец, тăвар, майонез, тип çу, укроп кирлĕ.**

Теркăланă кишĕрпе тăватcalласа каснă сухана тип çупа ăшаламалла. Çăмартана теркăламалла. Пулла вилкăпа вĕтетмелле. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тăвар, укроп хушмалла.

## Кăмпа яшки

**300 грамм кăмпа, 1 апат кашăкĕ шĕвĕ хăйма, 500 грамм çĕр улми, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, тăвар, пăрăç, укроп, тип çу кирлĕ.**

Кишĕрпе çĕр улмине тăваткалласа турамалла, пĕçерсе тӳмелле. Вĕтетнĕ суханпа кăмпана тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç хушмалла. Пахча çимĕç нимĕрне шĕвĕ хăймапа, кăмпапа суханпа, вĕтетнĕ укроппа пăтратмалла.

## Какайпа кăмпа хăпартăвĕ

**1,5 килограмм çĕр улми, пуçлă 2 сухан, 1 кишĕр, 300 грамм кăмпа, 700 грамм какай фаршĕ, 3 çăмарта, тип çу, тăварпа пăрăç кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çĕр улмине 1 суханпа пĕçермелле, тăвар хушмалла. Ăна тӳсе 2 çăмартапа пăтратмалла. Вĕттĕн туранă суханпа теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла, фарш ямалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Кăмпана уйрăммăн ăшаламалла. Тип çу сĕрнĕ çатмана нимĕрĕн çур пайне хумалла, ун çине кăмпапа фарш сармалла. Ăна нимĕрпе витмелле. Çиелтен çăмарта сĕрмелле. Хăпартăва духовкăра 20 минут пĕçермелле.

## Помидор кукăлĕ

**Чуста çăрма 1 стакан çăнăх, теркăланă 1 апат кашăкĕ сыр, 65 грамм услам çу, 1-2 апат кашăкĕ сивĕ шыв, 1 лимон сĕткенĕ, 1/4 чей кашăкĕ сахăр, 1/2 чей кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума 5 помидор, 0,5 стакан майонез, теркăланă 1 стакан сыр, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Туранă услам çăва çăнăхпа, тăварпа, сахăрпа, сырпа пăтратса, лимон сĕткенĕпе сивĕ шыв хушса чуста çăрмалла. Ăна йĕтĕрлесе çатмана хумалла, айккине хăпартмалла.

Вĕри шыва чиксе кăларнă помидор хуппине сӳмелле, вĕттĕн тураса техĕмлĕхпе пăтратмалла. Ăна чуста çине сармалла. Теркăланă сыра майонезпа пăтратмалла. Çак хутăшпа помидора витмелле. Кукăль 40-45 минутран пиçет.

## Лаваш рулечĕ

**Çӳхе 2 лаваш, 500 грамм шампиньон, салат çулçи, пуçлă 1 сухан, майонез, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă кăмпапа сухана тип çупа ăшаламалла. Лаваша пĕр-пĕрин çине хумалла. Унтан салат çулçи сармалла, майонез сĕрмелле. Çиелтен суханпа кăмпа хутăшĕпе витмелле. Рулет пек çавăрса сивĕтмĕше хумалла. Касса сĕтел çине лартмалла.

## Сухан кукăлĕ

**Чуста çăрма 150 грамм çăнăх, 50 грамм услам çу, 5 апат кашăкĕ сĕт кирлĕ.**

**Ăшне хума пуçлă 2-3 сухан, 100 грамм чăх какайĕ, тип çу, çиелтен яма 2 çăмарта, 50 миллилитр сĕт, тăвар, пăрăç, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма хатĕрлемелле.**

Чуста çăрмалла. Ăна 30 минутлăха сивĕтмĕше хумалла.

Çурма çаврашкан туранă сухана тип çупа ăшаламалла, вĕтетнĕ чăх какайĕ хушмалла.

Çăмартана сĕтпе, шĕвĕ хăймапа пăтратмалла, тăварпа пăрăç ямалла.

Йĕтĕрленĕ чустана çатмана хумалла, айккине хăпартмалла. Ăна духовкăра 20 минут пĕçермелле. Унтан суханпа какай хутăшне сармалла. Çиелтен çăмарта хутăшĕ ямалла. Кукăле тепĕр 30 минут пĕçермелле.

## Макаронпа кăмпа

**250 грамм макарон, пĕçернĕ 300 грамм кăмпа, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, 100 миллилитр сĕт, 1 чей кашăкĕ çăнăх, 50 грамм сыр, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Макарон пĕçермелле. Вĕттĕн туранă суханпа кăмпана, теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç хушмалла.

Макарона кăмпа хутăшĕпе пăтратмалла. Ăшă 100 миллилитр шыва сĕтпе, çăнăхпа хутăштармалла. Çак соуса макаронпа кăмпа хутăшне ямалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла. Макаронпа кăмпана духовкăра 10 минут пĕçермелле.

ШУТА ИЛМЕ

# Пĕтнĕк шанасран

Пĕтнĕк – анлă усă куракан ӳсен-тăран. Вăл ĕçме-çимене урăх тутă кĕртет, пӳлĕмре тутлă шăршă кăларать. Çапах ăна мĕнле упрамалла-ха?

Каснă пĕтнĕк хăвăртах шанать. Темиçе сехетрен тин унпа усă курасшăн тăк – ӳсен-тăрана нӳрĕ татăкпа витмелле.

Нӳрĕ татăкпа чĕркенĕ пĕтнĕке сивĕтмĕше хумалла – вăл 2-3 кун лайăххах упранĕ.

Ăна полиэтилен çатăркана чиксе çыхмалла – капла та вăл темиçе кун шанмĕ.

Ӳсен-тăрана шăнтмăша хума юрать. Ăна хуçса илсе коктейле, чейе хушма меллĕ.

Çапах та пĕтнĕке нумайăшĕ типĕтет. Вăл 2 çул таранччен упранма пултарать.

Тепĕр тесен, пĕтнĕке пӳлĕмрех ӳстерме пулать. Ӳсен-тăран çулçине е тунине шыва лартмалла. Вăл хăвăртах тымар ярать. Çакăн хыççăн ăна чӳлмеке лартмалла. Курăк хăвăрт ӳсет. Çулçине татсан пушшех сарăлать.



ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Çырла вĕтелсен



Хура пилеш çырли самаях вĕтелчĕ-и? Çакăн сăлтавне йывăç ватăлнинче е тĕм çăралнинче шырамалла. Çавăнпах хутрансирен ватă туратсене иртмелле, 7-8 çултан ытла ӳстермелле мар. 10-12 турат пулсан та çитет.

# Йывăçа мăк курăкĕ сырсан

Мăк курăкĕ ытларах чухне шывран аякра мар вырнаçнă сад пахчисенче е çĕр нӳрĕ тăракан вырăнсенче ӳсекен йывăçсене сырать. Мĕнпе сиен кӳрет-ха çак ӳсен-тăран? Вăл вулă çинчи пĕчĕк шăтăксене хупласа лартать. Çавна май йывăç сывлами пулать. Унсăр пуçне шăпах мăк ăшĕнче пахчара сиен кӳрекен хăш-пĕр сăтăрçă пурăнать.

Çавăнпах мăк курăкне вăхăтра пĕтермелле. Йывăç тураттисене хытă çĕтĕкпе е йывăç калакпа хырса тасатмалла. Кун хыççăн вулăсене 1 процентлă ешĕл сенкерпе /медный купорос/ е 3 процентлă тимĕр купоросĕпе дезинфекцилемелле.

# Грушăна хĕле хатĕрлесси

Груша йывăçне хĕл касма хатĕрленĕ май малтан турат çинче юлнă мĕн пур çĕрĕк çимĕçе пуçтармалла. Хăрнă туратсене касмалла. Аманнă вырăнсене тасатса сиплемелле те сăмала сĕрмелле.

Груша тымарĕ пан улминнипе танлаштарсан хăвăртрах шăнать. Çавăнпа ăна шăварсах тăмалла. Уйрăмах кĕркунне типĕ килсен.

Йĕркеллĕ хĕл каçтăр, çуркунне чечеке ларма хăвăртрах вăй илтĕр тесен йывăçа кĕркуннех имçамламалла. Йĕркене пăхăнсан ватă йывăç çеç мар, çамрăкки те çăмăллăнах хĕл касĕ. Туратсене май пур таран ытларах юрпа витни те пăсмĕ.

Тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсăр пуçне йывăçсене сĕтеклĕ вулла кăшлакан чĕр чунсем те сиен кӳме пултараççĕ. Мулкач-шăши ан илентĕр тесен йывăçа пусма тавраш ĕпе чĕркемелле е хыр-чăрăш лăсси хумалла.

# Çĕр хатĕрлетпĕр

Сивве чăтăмлă культурăсем кăпăшка çĕре юратаççĕ, çавăнпа йăрана хăйăрпа е пăчкă кĕрпипе хутăштармалла. Лайăх çĕрнĕ тислĕкпе /тин çеç пухни вăрра çĕртме пултарать/ апатлантармалла.

Акмалли чи лайăх вырăн – çурçĕр çилĕ лекмен тӳрĕ çĕр. Юр нумай хуса лартакан çĕрти е айлăмри йăрансене çатăркапа е агросӳспе хупламалла, теплица тусан та япăх мар. Капла юр хăвăрт ирĕлĕ, вăрлăх нӳрĕк ытлашши туртмĕ. Сăмах май, витĕкçĕ çуркунне илмелле мар – ретсен тĕлне кăна уçăр. Çатăркапа агросӳс çум курăка шăтма кансĕрлĕç.

Çуркуннехипе танлаштарсан кĕркунне вăрра 1 сантиметр тарăнрах тата 1,5 хут нумайрах акмалла. Унччен ăна сиенсĕрлетмелле тата ӳсме пулăшакан хатĕрсемпе имçамламалла.

# Калча пăхасси

Кĕркунне акса хăварнă калчана çуркунне шăтса тухсанах сайралатмалла. Çанталăк ытла ир ăшăтсан йăрансене çатăркапа хупламалла. Агросӳс тата лайăххах – ăна валли кăшкар кирлĕ мар, уçмасан та йăран хĕвелпе хĕрсе каймĕ. Ӳсен-тăрана вăхăтран-вăхăта шăвармалла тата çумламалла. Хутăш удобренипе апатлантарсан лайăх.

Кĕркунне акнă культурăсем çуркунне ир тухса вăй илнĕ пирки вĕсене сăтăрçă иленсе ĕлкĕреймест. Каюра çеç сăтăр кӳрес хăрушлăх пур. Ăна ультра сасăллă чăрмавпа, тĕтĕм шашки сирпĕтсе хăвалама пулать. Пахчаçăсем асăрханă тăрăх, тепĕр чух çĕрĕк чирĕ лекет – хавшанă калчасене кун пек чухне кăкламалла.

КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Абрикос** – палăртнă ĕçсем ăнăçлă пулмалла пек. Анчах асăрханăр, кăмăла хуçакан самантсем ăнсăртран сиксе тухма пултараççĕ.

**Çурла уйăхĕ тĕлленсен** – юратнă çынпа пĕр-пĕрне ăнланман самантсем сиксе тухаççĕ ахăртнех;

**качча кайман хĕр çурла уйăхĕпе аташни** – çак уйăхра туй пуласса систерет.

**Çăмăл машинăпа çӳресен** – ĕçре лайăх улшăнусем пулмалла. Çав вăхăтрах тĕрĕс мар утăм тăвасран питех те асăрханмалла.

**Хăйĕн ĕçне тăрăшса пурнăçлакан çыравçа курни** – эсир литература ĕçĕпе аппаланасса, çак ыйту сире питех те канăçсăрлантарасса.

**Ази çĕр-шывĕсем тăрăх çӳрени** – пурнăçра улшăнусем кĕтеççĕ, анчах укçа-тенкĕ енчен ытла тупăш кӳмĕç вĕсем.

**Академире курса çӳрени** – хăй вăхăтĕнче кахалланнипе туман ĕçсемшĕн халĕ кулянма тивĕ.

**Аккордеон сассипе киленни** – сире хаваслă ĕç кĕтет, вăл иртнине аса илсе кулянма памĕ. Çавăнпах пăтăрмахсене çăмăллăнах иртерме вĕренетĕр.

**Актриса курни** – савăнăç палли;

**актриса макăрсан** – эсир юлташăра йывăр лару-тăруран тухма пулăшасса;

**тĕлĕкре актера е актрисăна юратни** – эсир талантлă пулни кăмăла каякан ĕçпе тăрăшма май парать;

**хăвăр актер тăк** – пурлăх çăл куçĕ шырама тивĕ, тăрăшни сая каймĕ.

**Акула** – тăшмана;

**таса шывра ишекен акула** – эсир лăпкă пурăннă вăхăтра сире курайман çын телейĕре таптама тăрăшать;

**вилĕ акула** – тăнăçлăх таврăнасса.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Сĕт якатать



Сĕтпе усă курса хатĕрленĕ хăш-пĕр хутăш пит çинчи пĕркеленчĕксене якатма пулăшать. Акă, сăмахран, 2 чей кашăкĕ пыла 1 апат кашăкĕ типĕ сĕлĕ пăттипе, 2 апат кашăкĕ шывпа тата 2 апат кашăкĕ сĕтпе пăтратмалла. Хутăша шыв мунчинче ăшăтмалла, марля çине хурăн сийпе сĕрмелле, пит çине хумалла, салфеткăпа тата ал шăллипе витмелле. 20 минутран пите ăшă шыпа çумалла.

# Çӳç валли – лосьон

Çӳç шураласран ятарласа хатĕрленĕ лосьон пулăшĕ. Хупахăн вĕтетнĕ 2 апат кашăкĕ тымарне çур литр шыва ямалла та çурри чакиччен вĕретмелле, 2 апат кашăкĕ укроп вăрри хушса 2-3 сехет тăртармалла. Сăрăхтармалла. Икĕ уйăх ирхине çак шывпа пуça сăтăрмалла.



ШĂПА

# Марук аппа савăнăçĕ

Уявччĕ ун чухне. Чие çырли пуçтаратпăр хайхискерсем. Кукамай çуртĕнче халĕ никам та пурăнмасть ĕнтĕ. Çапах хуларан яла кайнă чухне атте-анне килĕсĕр пуçне унта та çитме тăрăшатпăр. Пӳрт-çуртне, пахчине тирпейлĕ тытатпăр. Хирĕçех пурăнакан Марук аппа та ют пахчана ача-пăча, выльăх-чĕрлĕх кĕресрен пăхкаласах тăрать.

– Эй, кам унта, çырла вăррине часах тытатăп акă, – вăрçкаласа килет пĕри. Чим, ара шăпах Марук аппа сасси-иç. Çывăхарах çитсен хăй те палларĕ. – Э-э-э, эсир иккен. Эпĕ ют çын алхасать тесе, – йăл кулчĕ ырă кăмăллăскер. Мĕнле пурăннипе кăсăкланчĕ, ачасен сывлăхĕ пирки ыйтса пĕлчĕ. Унтан хайхи хыпăнса ӳкрĕ:

– Ачамăрсем, айтăр-ха пирĕн пата. Калама мансах кайнă: манăн халĕ кин пур. Çĕнĕ çын праçник ячĕпе кукăль пĕçерчĕ. Айтăр-айтăр, ас тивмелле, хакламалла çимĕçе, – алăран çавăтсах илсе каçрĕ аннепе иксĕмĕре.

Ватă çынна епле кӳрентерĕн? Кăмăлне тупмах тивет. Тепĕр тесен Марук аппа пирĕншĕн те ют мар – тăванах.

Çĕнĕ çынпа паллашма сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр хайхи.

Кукăлĕ чăннипех те чĕлхе çăтса ямалла тутлă. Ӳркенмесĕр темĕн тĕрлине пĕçернĕ инке.

– Мĕн тери савăнăç, мĕн тери телей халĕ манăн. Кин килчĕ-çке, кин. Хăçантанпа кĕтнĕ ăна, – шывланчĕ аппа куçĕ. Хĕпĕртенĕ хăй, тем пек хăпартланса калаçать. Ара, ватă çын савăнăçне те ăнланма пулать. Хĕрĕсем мăшăрланнă-ха Марук аппан. Кĕçĕн ывăлĕ çеç ниепле те çемье чăмăртаймасть. Хусахсен йышне те кĕртнĕччĕ ăна ялта. Ара, хĕрĕхрен иртсен тин арăм тупма çăмăл мар-çке. Хĕрсемпе пач калаçман мар Ваçук – тем ăнмарĕ. Çĕнĕ лавкка уçăлсан кӳршĕ ялтан куллен çӳрес мар тесе Марук аппасем патне пĕр чиперкке хваттере кĕнĕччĕ. Унпа та юрату çинчен калаçкаласа пăхрĕç. Анчах та майра ялти урăх хусахпа çывăхланчĕ те Ваçука тиркерĕ. Çапла хваттертен те тухса кайрĕ.

Арçыннăн – арăм, карчăкăн – кин тупас шанăç пăчланнă пекчĕ: ăнсăртран телей пырса шаккарĕ. Кӳршĕ ялти пĕр арăмпа паллаштарма шантарнă ăна. Арăм та мар-ха – качча кайман, ача çуратман пĕччен хĕрарăм. Ара, камăн мăшăрлă пулас килмест-ха? Марук аппа вăрттăн систернĕ тăрăх, малтанласа телефонпа калаçнă хайхисем, хушăран Ваçук ун патне хăнана кайкаланă, кил-çуртра пулăшнă. Сахал-и арçын валли ĕç? Хĕрарăм тӳрех килме шикленнĕ. Ара, йăлтти-ялтти сиккелеме çамрăк мар-çке. Пĕр-пĕрне хăнăхмалла тата. "Ывăлăм кайрĕ-ха та, кинĕ килĕ-ши? Намăс курмăпăр-и?" – вăрттăн хуйхăрнă Марук аппа.

Телей кайăкĕ аякка пăрăнса иртменни халĕ куç умĕнчех. Тутлă кукăле çăвар тулли çинĕ май вĕсемшĕн савăнтăм. Марук аппа хăй телейлĕ – унăн кин пур. Ваçукăн та куçĕ çиçет. Калаçăвĕнчен те хĕпĕртени палăрать. Верук çеç, çулсем сахал мар пулин те, хăйне халĕ те сăпайлă хĕр пек тытать. Çакă ĕнтĕ кăмăлĕ лайăххине те, чунĕпе таса пулнине те пĕлтерет.

**ЛИСУК.**

АХ, АНЧАХ...

# Çунтарма хăяймастăп...



"Хаклăран та хаклă, юратнă çыннăм Паша!

Санăн ман çырăва пачах та вулас килменнине ăнланатăп. Уйрăлнă чухне текех чăрмантармăп тесе сăмах патăм. Анчах ăшăмра мĕн пулса иртнине сана пĕлтересех килет. Айăпа хам çинчен сирме тăрăшатăп тесе ан шухăшла. Чун ыратăвне çеç пайласшăн эпĕ. Ăшăма еплерех çилтăвăл ăскани сана пачах кăсăклă мар пулин те кăштах та пулин ăнланма тăрăш мана.

Савниçĕм, сана нихăçан та усал сунман эпĕ. Халĕ те эсĕ телейлĕ иккенне çеç курасшăн. Юратнă çынна тата мĕн пиллĕнха? Мана эсĕ халĕ тем те пĕр каласа вăрçатăн пуль. Вăрçах... Çемйӳне аркатрăм, чеелентĕм, улталарăм... Эпĕ еплерех çуннине çеç ăнланас çук. Çывăрма выртмассерен çав самантра чуншăн хаклă этем урăххине ыталанине пĕлсе тăрса ыйха путма мĕнле йывăррине нихăçан та ăнланаймăн. Икĕ хĕрарăм пĕр арçынна çурмалла уйăрайманнине вара чухламастăн та. Эпĕ вара сана ытла та хытă юрататăп. Никампа та пайлама пултараймастăп. Малашне сансăр епле пурăнмаллине пачах пĕлместĕп. Çавах юрату вăййине те текех виççĕн выляма çуккине ăнланатăп. Паян мар тăк ыран иксĕмĕртен пĕрне суйласа илмеллине эсĕ те манран кая мар чухлатăн. Пурăна киле мăшăру ман пирки пĕтĕмпех пĕлессе сисеттĕн, анчах вăхăта тăсаттăн. Çак саманта чăтса ирттермеллехчĕ пирĕн. Сана çухатнине те, хам айăплине те пĕлетĕп. Чĕрем çурăлса тухать.

Иксĕмĕр хушăмăрти вăрттăнлăха виççĕмĕшне систернишĕн кӳренетĕн. Мĕн çитместчĕ тетĕн. Пĕлетĕн-и – эсĕ! Сана никампа пайламасăр хамăн çеç тăвас килетчĕ. Ялан юнашар пулас килни вĕрилентеретчĕ. Эсĕ çак утăма тума пултарайманнине ăнлансах хутшăнăва чарас терĕм.

Савăнса пурăнма пĕтĕмпех пур пек. Анчах эсĕ манпа юнашар çĕр каçман чухне епле лăпкă пурăнăнха? Сансăр тĕнче те тăвăр. Чăн телей – килĕшӳпе юратура, икĕ çын алран-ал тытăнса пурнăç сукмакĕпе юнашар утнинче.

Ĕмĕр пĕрле пулма еплерех ĕмĕтленеттĕм эпĕ. Телейпе килĕшӳре пурăнма ăнтăлаттăм. Шăпа вара пачах урăхла килчĕ...

Эпĕ сана юратнине манăça ан кăлар эсĕ. Çулу çине ăнсăртран килсе тухнишĕн те, лăпкăлăхна аркатнишĕн те, çемйӳне пăлхатнишĕн те, шанчăкна тӳрре кăларайманнишĕн те – пуриншĕн те каçар. Ытла ан айăпла. Саншăн лайăх пулаймарăм, савăнăç кӳреймерĕм. Сана юратнишĕн те каçар! Ан ылхан... Каяллах таврăнать теççĕ.

Кăвакарчăну".

Сан пата шăрçаланă юлашки çыру ку. Ăна çырнăранпа темиçе çул иртнĕ пулин те хушăран альбомран туртса кăларатăп та çине-çинех вулатăп. Çапла, куççуль витĕр çырнăскере вуламасăрах çунтарасран хăраса-ши, эпĕ ăна сан пата вĕçтерме вăй çитереймерĕм. Çурса тăкма та пултараймастăп. Чунăмран уйăрнă темле татăк-ши вăл? Е ахаль хут татки çеç-и? Тепĕр чухне ăна вуласан чĕремре темĕн йăшăлт! тăвать. Хушăран кулса илетĕп те хама айван-çке тесе вăрçатăп.

Çапла, аса илетĕп çеç. Сан ятупа тахçанах пурăнма пăрахнă эпĕ. Тĕрĕсрех, сансăр пурăнма вĕренсе çитнĕ. Кирлĕ-ши мана халĕ эсĕ? Шухăша путатăп та – çук текен хурав патне пырса тухатăп. Улталарăн мана. Çемье пуррине систермесĕр юрату вăййи выляран. Чĕреме çунтартăн, чунăма амантрăн. Тĕрĕс тунă-и эпĕ санпа хутшăнăва татса? Паллах. Аннем ахальтен мар çын куççулĕ çинче телей тума çуккине систерсех тăратчĕ. Мăшăрун ăраскалне çавăнпах татас мар терĕм. Каçарнă-ши эсĕ мана халĕччен? Кам пĕлет? Тен, хушăран халĕ те айăплатăнтăр. Аса илетĕн-ши? Паллах. Ахальтен мар тĕлĕксене килетĕн.

Маннă-ши эпĕ сана? Çук. Аса илмен пулăттăм. Юратнă-ши эпĕ сана? Юратнă-тăр. Ахаль пулсан çырăва усраман пулăттăм.

**ВАЛЕНТИНА.**

ЧĂН ПУЛНИ

# Çирĕм çул иртсен...

Пĕррехинче çурт çумĕнчи лавккана хура çăкăр илме кĕнĕччĕ эпĕ. Никамах та çукчĕ. Раиса сутуçă мана:

– Кĕç-вĕç илсе килмелле. Кăштах кĕтмелле пулать, – терĕ. Эпĕ мĕнле пурăннипе кăсăкланчĕ. – Тахçантанпах курман. Чирлемерĕр пулĕ те?

– Хыçранах сӳпĕлтетсе çӳрет, – шӳтлетĕп хайхискер. – Сирĕн пысăк хуйхă пирки илтнĕччĕ-ха. Çавăн пирки шухăшласа çывăрайми те пулнăччĕ.

– Унтанпа тепĕр инкек те пырса çапăнчĕ ĕнтĕ, – тăрук пӳлчĕ вăл мана. – Ах! Хуйхă çине хуйхă... Çирĕмри чипер хĕрĕме пĕр ӳсĕр çамрăк машинăпа таптаса вĕлерне хыççăн мăшăрăмпа кунĕн-çĕрĕн макăраттăмăр. Кулянниле ашшĕн чĕри чăтаймарĕ – вăл та çĕре кĕчĕ. Аслă хĕрĕмпе ăна та пытартăмăр.

– Ай, тур-тур!.. – тĕлĕннипе шак хытрăм.

Раиса куçĕнчен шăпăртатса куççуль юхать. Мĕн тери илемлĕ, сăпайлă, ырă кăмăллă, йăрăс пӳллĕ хĕрарăм самантрах сăнран улшăнчĕ. Ăшĕ çуннипе чылай начарланнă хăй.

– Мăшăра пытарсанах хам боьницăна лекрĕм. Тухтăрсене тавах. Вилĕмрен операци туса çăлчĕç. Ытла нушаллă пулчĕ ку çул. Аслă хĕрĕм хăйĕн çемйипе пурăнать. Эпĕ вара пĕчченех.

– Мăшăрпа килĕштерсе пурăннă пулсан пушшех те йывăр ĕнтĕ, – сăмах хушрăм эпĕ.

– Шкул пĕтерсен пачах урăх каччăпа çӳренĕ-ха эпĕ. Сашенька тесе чĕнеттĕм ăна. Çав тери юрататтăмăр пĕр-пĕрне. Ĕмĕр пĕрле пулма тупа тăваттăмăр. Тустантăш та ăмсанатчĕ пире, – хĕрарăм пуçне пĕксе шухăша путрĕ.

– Пĕрлешмерĕр-им?

– Савнине çухатасран хăранипе-ши качча тухма та хатĕрччĕ эпĕ, анчах Саша пĕрлешме иккĕленетчĕ. Тытрăм та ăна кĕвĕçтерес тесе урăххипе мăшăрлантăм. Вăл та мана кӳреннипе теприне качча илчĕ. Çапла пирĕн таса юрату пăчланчĕ. Аса илсен халĕ те чун ыратать. Анчах чавсана çыртма çук. Пĕрремĕш юратăва нимĕн те çитмест иккен.

Часах машина та çитрĕ. Ăшă çăкăр илсе ерипен килелле утрăм. Раиса каласа кăтартнине нумайччен аса илсе çӳрерĕм.

Хваттер сутса урăх çĕре куçнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Ĕнер çак лавкка умĕпе иртнĕ май хайхи Раисăна курассишĕнех кĕтĕм. Илемлĕ сутуçă мана яланхилле ăшшăн кулса кĕтсе илчĕ.

– Ырă çыннăм, эпĕ сире тахçантанпах кĕтсе пурăнатăп, – терĕ вăл.

– Тем пулмарĕ пулĕ те? – хыпăнса ӳкрĕм хайхи.

– Кĕтмен çĕртен манăн шăпа тĕпĕ-йĕрĕпе улшăннине каласа кăтартасшăн-çке.

– Лайăххине итлеме яланах хатĕр эпĕ. Пуçла.

– Тантăшăм çуралнă кунне паллă тума яла чĕнчĕ. Сăмахсăрах килĕшрĕм. Уй хапхине уçса кĕрсен малтан лавккана çул тытрăмăр. Пахча айккипе иртнĕ чух тем çӳллĕш ӳссе кайнă йăмрана тăрук палласа илтĕм. Ара ку пирĕн асамлă вырăн-çке. Эпир савнипе каç пулттипе çакăнта чупса килеттĕмĕр. "Сана çеç юрататăп", – тесе пĕрремĕш хут чуп тунине аса илтĕм. Чĕрем кăрт! турĕ. Ара вăл та ку ялтанахчĕ-çке. Тантăшăм лавккана кĕме тăрсан ăна хирĕç алăк уçса маншăн хаклă çын – Саша – тухрĕ. Куçсем тĕл пулсан пăлханса кайнипе пĕр хушă ним чĕнме аптăраса тăтăмăр. "Мĕнле пурăнатăн?" – тинех ыйтрĕ вăл. "Чиперех. Хăв тата мĕнле?" – аран çăвар уçрăм эпĕ. "Сансăр мĕн пурăнни? Телейлĕ пулаймарăм". Юлташăм лавккаран тулли сумкăпа тухрĕ. "Кӳршĕ, çуралнă куна эсĕ те пыр", – терĕ вăл пирĕн калаçăва татса. "Апла тăк тĕл пуличчен", – савăнăçлăн ал сулчĕ те Саша ансăр тăкăрлăкалла пăрăнса часах курăнми пулчĕ. "Раиса, мĕн пулчĕ? Мĕн шыв сыпнă пек тăратăн? Тăхта-ха, эсĕ ăна халĕ те савмастăн пулĕ те? Икĕ çул каялла вăл та мăшăрне пытарчĕ", – терĕ тусăм.

– Пычĕ-и уява? – васкататăп эпĕ.

– Пычĕ. Ăсатма тухсан: "Сар хĕвелĕм эсĕ манăн. Паян сана тĕл пулнишĕн турра тав тăватăп. Халĕ эсĕ те, эпĕ те пĕччен. Хирĕç мар пулсан малашне алла-аллăн тытăнса пĕр сукмакпа утар", – терĕ. "Ах, Сашенька, эпĕ сана малтанхинчен те ытларах саватăп", – терĕм пуçăма ун кăкăрĕ çине хурса. Унтан шăп вун çиччĕри чухнехилле хамăрăн йăмра патне чуптартăмăр.

– Эппин, кĕçех пĕрлешетĕр пулĕ.

– Виçĕм кун 50 çул тултарнине паллă турăмăр. Вăл мана пурин умĕнче ылтăн çĕрĕ парнелерĕ, качча тухма ыйтрĕ. Акă – аллăмрах. Халĕ эпĕ калама çук телейлĕ. Юрату хăвачĕ мĕн тери паха: çунатлантарать, пурăнма вăй-хал парать. Савăннипе юрлас-ташлас килет.

– Тĕлĕнмелле шăпа... Ара сире тура пĕрле пулмах пилленĕ. Эпĕ те ырлăх-сывлăх, телей сунатăп, – терĕм.

– Тавах, ырă çыннăм, – терĕ Раиса куççуль витĕр мана ăсатнă май.

**Левтина МАРЬЕ.**



Альбина ПАЛАНТАЙ

# Майра кин

Уралта пурăнакан ывăлĕ тăван кĕтесе курма килес пирки хыпарласан Евруç кинеми питĕ хĕпĕртерĕ. Çав хушăрах кăшт канăçсăрланчĕ те. Кинĕ – вырăс, пĕрремĕш хут тĕл пулаççĕ вĕсем. "Хулара çитĕннĕскер килĕштерĕ-ши ял пурнăçне? Чăвашла пĕлмест, вырăсла еплерех сыпăнтармалла-ха унпа? Сăмахпа мар тăк чун-чĕрепе те пулин пĕр-пĕрне ăнлансан тем пекехчĕ", – явăнчĕ шухăш.

...Кĕтнĕ кун кăмăллă иртрĕ. Сап-сарă çӳçлĕ, çĕмĕрт пек хура куçлă, хĕп-хĕрлĕ туталлă яштака кинĕ: "Салам, анне!" – тесе алă парсан карчăк çăварне карсах пăрахрĕ.

– Страствуйте, – терĕ çурма сасăпа именчĕклĕн. – Анне терĕ. Чăвашла пĕлет-çке кинĕм, – ывăлĕ çине савăнса пăхрĕ вăл.

– Куратăн, анне, Лиля тăрăшать. Килĕшет ăна чăваш чĕлхи. Тепре килсен санпа шакăртаттарсах калаçĕ акă.

– Тем пекехчĕ, хаклăскерĕмсем.

Çутă кӳлĕсемлĕ, ешĕл йăмраллă, симĕс тумлă чăваш ялĕ хула чиперккине чăннипех тыткăнларĕ-тĕр. Уçă сывлăшлă тавралăх хăй патне туртрĕ. Уйра тинĕс евĕр хумханакан çӳллĕ ыраша пăхса тăранаймарĕ Лиля. Унта пухнă кăн-кăвак утмăл турат çыххине хунямăшне парнелерĕ. "Тавах, кинĕм, мана çапла чысланăшăн", – хавхаланчĕ ватă.

Анчах пурăнан пурнăçра яла пĕрремĕш хут ярса пуснăскершĕн тĕлĕнмелли те сахал мар пулчĕ. Кил хушшинче çӳренĕ хушăрах тĕрлĕ кăлтăк-мыскара сике-сике тухрĕ. Çавăнпа та уни-кунирен сыхланса мăшăрне Нестерĕн асăрхаттарсах тăма тиврĕ.

Хапха умĕнчи тарăн çăлран тулли витрене алăпа çавăрса кăларма çăмăллăнах хăнăхрĕ-ха Лиля. Çĕклемпе шыв йăтассине Нестер хăй çине илчĕ. Вăл юрĕ-ха. Шарлаттарса авăтакан хĕрлĕ киккириклĕ автанпа шурă, хура, чăпар чăхсем çĕнĕ çынна чăннипех сисчĕвлентерчĕç. Вĕсем, хунямăшĕ хыççăн çӳреме вĕреннĕскерсем, ăна та хăвăртах хăнăхрĕç-тĕр, кил картине тухсанах ун патнелле чупаççĕ. Яла киличчен чăхсене куça-куçăн курман Лиля, хăйне сăхма пыраççĕ тесе, йăпăр-япăр тарса пытанать вĕсенчен.

Нестер "майрапа килнĕ" тени ялта хăвăрт сарăлчĕ. Хуçисем чĕнессе кĕтмесĕрех тăван-хурăнташ Евруççем патне пухăнчĕ. Хаваслă сăмах-юмахпа, ăшă саламсемпе тулчĕ кĕреке. Ваттисен йăлипе амăшĕ ачисене пиллерĕ, пурнăç çулĕпе алла-аллăн утма таса та çирĕп юрату, телей сунчĕ. Пурте харăссăн шăрантарнă "Уç-ха, тăван, кантăкна" юрă ялĕпех янăрарĕ.

Каçа хирĕç Нестер пиччĕшĕ Якур çывăх тăвансене пурне те хăйсем патне хăнана илсе кайрĕ. Сĕтел хушшинче кăшт ларнă хыççăн Нестерпе Лиля пахчана уçăлма тухрĕç. Кӳршĕсен анкартинче утă çулакан Леньăна палласан Нестер тӳрех ун патне васкарĕ. Пĕрле выляса ӳснĕ юлташсем ыталанса илчĕç. Унтан вара сӳтĕлчĕ те сӳтĕлчĕ аса илӳсен çăмхи. Лиля та хаваспах итлерĕ вĕсене. Иккĕшĕ калаçчăр-ха тесе кăштахран вăл пӳрте кĕме хатĕрленчĕ. Кил картинче чăхсем курăнмарĕç те хăюллăнах утрĕ вăл. Çав вăхăтра хапха алăкĕ уçăлчĕ, унта тăванĕсен пĕчĕк ывăлĕ Çеруш курăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, ун хыççăнах ĕнепе пăру мăшлатса чупса çитрĕç. Нимĕн тума аптранипе куçне чарнă Лиля... ни малалла, ни каялла... Хăй патнелле ыткăнакан шултра выльăхран сехре хăпасла хăранипе сисмесĕрех кăшкăрса ячĕ вăл:

– Нестя-я-я! Скорей! Помогите! Анне-е!

Юрать-ха картишне çурмалла пӳлнĕ. Унсăрăн кĕтӳрен çитсе шыв хуранĕ патне васкаканскерсем çынна таптаса каçса та кайĕç...

Çакна курсан Çеруш çухалса каймарĕ: чупса пырса тимĕр алăка шăкăлт! çаклатрĕ, "мăйракасене" малалла иртермерĕ. Пукане пек инкĕшне хĕрхенсе шеллерĕ. Кĕпĕрленсе килнĕ сурăхсене те патакпа хăваларĕ:

– Марш! Марш урама! Майра инкене ан хăратăр! – хапхана та самантрах хупрĕ вăл.

Шăв-шав илтсе пӳртрисем тулалла васкарĕç. Нестер те пахчаран вĕçтерсе кĕчĕ.

– Ну, Çеруш, пăхаттир! Эсĕ пулман тăк чипер инкӳне кам хӳтĕлĕччĕ? Чăнчăн хӳтĕлевçĕ! – мухтарĕç пурте шăпăрлана.

## СĂВĂ СĔВЕМĔ

Любовь МАРТЬЯНОВА

# Тĕлĕкре пулин те килсем...

Çĕртен çӳлелле ӳсме те йывăр,
Çӳлтен çĕрелле ӳкме те йывăр.
Чи хăрушши – ним те çукки –
Çĕрпе пĕлĕт хушши – пуш-пушши...

* * *

Юрлă-çумăрлă çав халь ман кăмăл,
Кĕрсе кур хăтлах мар кăмăла.
Чĕр чечек вырăнне типнĕ хăмăр,
Çук унта çĕр çырлиллĕ хăйма.

Пурри – пур – асилӳ – çăлтăрла ялкăшаççĕ,
Çулсем витĕр çунаç курăни-курăнми.
Тӳпери çăлтăрсем çăлтăрпах çав выляççĕ...
Çĕр çинчи вăл юлать палăри-палăрми.

* * *

Ах, Кĕтне, Кĕтнеçĕм! Виçĕ хут çеç курнă,
Тепĕр ĕмĕр кĕтрĕм тепĕр хут курма.
Халь мĕнле, пĕлместĕп, асăмра çеç юлнă.
Шур кăлканлă улăх выртать пек умрах.

Лĕпĕшсем вĕçеççĕ, вĕлтĕр-вĕлтĕр ушкăн...
Тем калас килетчĕ, калама пĕлмен.
Халь пăшăлтататăп, шур кăлканăм, уншăн,
Илтнĕ-и?.. Илтмен-и?.. Кĕтнĕ-и? Кĕтмен?..

Ах, кăлканлă улăх, шурă-шур кăлканăм...
Ырă, ăш çӳçенчĕк килчĕ ас илсен,
Чунăма сĕртĕннĕ туйăма-и манăн,
Тĕлĕкре пулин те эс килсем, килсем...

* * *

Сана чĕнетĕп те – килетĕн, кĕтнĕ шăплăх,
Канлĕх кӳрес тесех килетĕн, кĕтнĕ шăплăх,
Тен, шăплăхах та мар, итле-ха тимлĕн,
Илтес тесен, мĕскер кăна унта эс илтмĕн:
Çил шăхăрни...
Ăш вăркани...
Чун нăйкăшса пăчăртанни...

Куç вылянăвĕ...
Ал хусканăвĕ...
Ик ĕмĕлке ыталанни...

Ячĕ пĕрех юлать вăл – шăплăх.
Пур тепĕр шăплăхри пуш шăплăх.
Ку тĕнчере те мар. Лере, лере...

Тӳперен уйрăлса тухса кайнă çĕрте.
Ячĕ пĕрех, унта та – шăплăх,
Чăн-чăннипех вăл пушă ШĂПЛĂХ.

* * *

Эп кантăк каррине те халь кармастăп.
Мĕскер куран.
Курас пулсан –
Пĕр тĕксĕм пӳлĕмре
Пĕччен çӳрен пĕр ĕмĕлке...
Тен, сехете,
Шута илсе ман ĕмĕре
Виçекене куна-çĕре.
Унтан –
Виç вырăнта виç пуш пукан,
Диван.
Лекес мартан сив тамăка
Хăтлăх тытма шур кăмака.

Ытти-хытти?
Шалти?
Чунри?
Ăшри?
Тухайман пӳлĕме вăл куççулĕн,
Чĕререх хытса юлнă вутчулĕн.

* * *

Кăтăр-кăтăр кулса урам тăрăх
Шух ачалăхăм, ав, ман çӳрет...
Лапамри ват йăмра çеç ма хăрнă,
Хыт турачĕ чуна-çке тирет.

Ан кулянччĕ, йăмра, ан кулянччĕ,
Аса ил ешĕл пулнă кунна.
Килесси-каясси – хăй черечĕ,
Çĕр çинче эпир пурте хăна.

* * *

Ытла та-çке тĕнчи синкерлĕ,
Хăш чух тĕнчи хура.
Тем хам вара çаплах тиркевлĕ,
Ытти-хытти – хама кура.

Хĕвел тени çаплах кулаймĕ,
Юлташ тени хăш чух сутать...
Кĕтни-чĕнни çаплах пулаймĕ.
Тавах турра! Хĕвел тухать.

* * *

Тĕкĕр çине пăхрăм та
Шӳтлĕн култăм:
«Эсĕ-и ку, – терĕм, –
Вун саккăрта пулни.

Эсĕ-и ку, – терĕм, –
Хĕрлĕ пан улми.
Эсĕ-иç ку, – терĕм, –
Юратса çунни».

Тепĕр енчи тепĕр тĕкĕр
Хуравне парать:
«Эсĕ-ха вăл, – тет хăй, –
Çитмĕле куçи.

Эсĕ-ха вăл, – тет хăй, –
Типнĕ пан улми.
Эсĕ-ха вăл, – тет хăй, –
Юрату ĕнтни».

Айккине кайрăм та
Хама хам каларăм:
Пурпĕр вĕт-ха пулнă
Пурăнни, курни.
Пурпĕр вĕт-ха пулнă
Утнă çул йĕрри,
Пурпĕр вĕт-ха юлнă
Сар мăнук кулли...

* * *

Мĕн-ма чĕнен чĕнес килмесĕр,
Мĕн-ма кулан кулас килмесĕр.
Пăхас пулсан сăмахсăрах
Ăнланăттăм, тен, ытларах.

* * *

Кăмăл-чăтлăх,
Çул – шыв-шур.
Чунра хăтлăх
Çуккă-тăр.
Ал тăсатăп –
Ал лекмест.
Сас паратăп –
Сас килмест.
Кил-ха, кӳршĕм,
Каçса лар.
Çитес иршĕн
Калаçар.
Ман та чунра лăпкă мар,
Сан та пурнăç пыл-çу мар.

Тепĕр тĕрлĕ шутласан,
Юрăри пек каласан:
«Пурнăç пăрнăç ялан мар».
Пуçтарнар, тăрар, утар.

Шыв-шур урлă каçăпăр,
Чăтлăх витĕр тухăпăр.

**2014 çул.**

Маргарита ПРОКОПЬЕВА

# Кӳлĕ хĕрринче

Куçран пăхрĕ çамрăк каччă
Çав тери хăюсăр.
Хĕр тусне вăл шанчăк пачĕ,
Ан хурлантăр уссăр.

Сĕмлĕхре тĕл пулчĕ каччă,
Хĕрĕ питĕ хӳхĕм.
Шур çеçкеллĕ чие сачĕ
Чăн илем каç кӳлĕм.

Кӳлĕ хĕрринче хавассăн
Вăрттăн çеç калаçрĕç.
Темшĕн хĕр сывларĕ ассăн,
Уйăха сăнарĕç.

Çăра ӳснĕ шур хăвалăх
Çил вĕрсен хумханчĕ.
Çамрăк ĕмĕр, шел, хăналăх.
Çăлтăрсем саланчĕç.

# Шыратăп

Шыратăп уй-хир тăрăх
Сан йĕрсене. Кун шăрăх.
Хăш еннелле-ши утрăн,
Кам чĕринче вут хутрăн?

Уçланкăра сăнатăп –
Пиçет палан хĕп-хĕрлĕ.
Эс çуккипе çунатăп,
Ик çыннăн шăпа тĕрлĕ.

Вăрман хĕррине тухрăм,
Умра миçе-ши çухрăм?
Эс каясса туйманччĕ,
Калас сăмах нумайччĕ.

Эс çуккипе шăнатăп,
Тĕл пуласса шанатăп.
Сана пĕрех тупатăп,
Пĕчченлĕхрен хăпатăп.

Лидия САРИНЕ

# Пан улми сĕткенĕ

Пан улми сĕткенĕ ман тута çинче,
Шывсăр типнĕ евĕр пăхрăн ман çине.
Юнашар пулсан та – эпир пĕрле мар,
Ӳкĕнĕç мĕнне те çавăнпа манар.

Паçăрах кĕтеççĕ çутă черккесем,
Шăппăн çеç йĕреççĕ пирĕн чĕресем.
Таврăнми кунсем-çке тухрĕç куç умне,
«Ăраскал пӳрмерĕ...» – теççĕ ку чухне.

Çавракa сĕтелĕ паçăрах кĕтет,
Хĕрлĕ пан улми те тем пек илĕртет.
Уйрăлу саманчĕ манăçмĕ часах,
Çакă-ши телейĕм, вăхăт халь пайтах.

Вĕчĕрхенчĕк туйăм пĕтнĕ асăмра.
Черккесем çĕклер-и, пултăр çăмăлрах.
Хуйхă-суйхă, терчĕ... куççульпе пĕрле.
Юхса кайтăр. Пĕттĕр! Тен, ĕмĕрлĕхех.

Шăппăн тĕлĕреççĕ пушă черккесем,
Кун пекки тек пирĕн пулмĕ ӳлĕмрен.
Пан улми сĕткенĕ сан туту çинче,
Ӳкĕнӳ куççулĕ шур минтер çинче.

# Ах, телей курки...

Хытăрах юратрăн пулĕ темшĕн,
Маншăн тунсăхлаттăн çав тери.
Ĕненмен ун чух, пĕлместĕн, темшĕн...
Халĕ мана çăмăл тетĕр-и?

Уйăхĕ асамлăн çутататчĕ,
Çывăрма пĕлместчĕ çĕрĕпе.
Вăл пире çӳлтен телей сунатчĕ,
Эх, аван-çке, тетчĕ, сирĕнпе.

Ăраскалăм, уйрăлу пулминччĕ.
Пĕр çулпах пире уттарăн-ши?
Ах, телей курки, ытла тулличчĕ,
Кам сыпса илме хăяйрĕ-ши?

АЧАЛĂХРАН

# Чарлан ташши



Шурă-шурă чарлан
ывăнмасăр паян,
Манăн кил умĕнче
çаврăнать.
Вăл теме-çке виçет,
тем тупасшăн вĕçет
Атăл çийĕ сахал-им ăна?

**Леонид Волков.**

Тӳпе кăн-кăвак, пĕр пĕлĕт татки çук, сарă хĕвел çеç ылтăн карап пек саркаланса ишсе çӳрет. Çырмасемпе варсем тăрăх çурхи шыв шăнкăртатса юхать. Йĕри-тавра емешĕл, улăхсемпе вăрмансем тин çеç тапса тухнă ӳсентăранпа витĕнсе капăрланнă. Курăк çăра шăтма ĕлкĕрнĕ пулин те, сăрт айккисенче кăштах юр тăрса юлнă-ха. Сывлăш чечеке ларма хатĕрленнĕ йывăç-курăкран сарăлакан ырă шăршăпа тулнă. Çак илемпе киленсе мĕн пур кайăк-кĕшĕк йăва çавăрать, савăнса юрă шăрантарать.

Яла килсе кĕнĕ çĕрте сулахайра юлакан çавра кӳлĕ çапçутă çуталса выртать. Тĕкĕр пек шывăн тикĕс те яка çийĕпе вĕтĕ хумсем чĕтренсе чупаççĕ. Хăмăшлăхра кăвакал амисен сассисем илтĕнеççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртса нартлатаççĕ. Çапла майпа аçисене йыхравлаççĕ имĕш. Йăх ĕрчетесшĕн мăнтарăнсем.

Кĕтмен çĕртен кӳлĕ çийĕн çĕлен пек авкаланакан кайăксен вăрăм карти вĕçсе иртрĕ. Кĕçех иккĕшĕ уйрăлчĕç те утрав çине пырса ларчĕç, ыттисем хăвасен хушшинчи хăмăшлăхра çухалчĕç. Иккĕшĕ те шап-шурă, вăрăм мăйлă, çинçе ураллă. Пирĕн таврара кунашкал кайăк нихăçан та пулман. Ял çийĕн тăрнасем вĕçсе иртклеленĕ-ха, анчах йăва çавăрса чĕпĕ кăларнине курман. Кĕтӳ кĕтекен Васук тете те сăрт çинче сĕтеклĕ курăк çисе çӳрекен ĕнисене хăварса пирĕн пата чупса çитрĕ.

– Ачамсем, кусем чарлансем. Чылайранпа пирĕн тăрăха вĕçсе килменччĕ. Эпир ача чухне нумайччĕ вĕсем, кайран таçта çухалчĕç. Кашни çуркунне кĕтеттĕмĕр, пирĕн тăрăхра темшĕн йăва çавăрмастчĕç. Ан хăратăр кайăксене, пули-пулми вырăн суйламаççĕ вĕсем, хăйсем килĕштернипе аннă ĕнтĕ ку утрав çине, – терĕ Васук тете.

Эпир, уроксем хыççăн ама хупаххи татма килнĕскерсем, тĕлĕнсе кайса сăнатпăр вăрăм ураллӑскерсене. Ӳкерчĕк çинче, телевизорпа çеç курнă та халиччен. Пĕр чарăнми çӳйхашатпăр, вĕсем шикленме те пĕлмеççĕ.

Акă, тĕлĕнтермĕш пуçланчĕ. Пĕр-пĕрне хирĕç тăчĕç те кӳлле чăма-чăма çăвăнма пуçларĕç. Нихăçан шыв курман тейĕн, харăссăн çунат çапса çурхи шывра чăмпăлтатаççĕ кăна. Енчен енне шыв сирпĕнсе тăрать. Вăрахчен ташларĕç чарлансем. Никам та савăнма чăрмантармарĕ вĕсене. Çăвăнса рехетленнĕ хыççăн иккĕшĕ те типсе кайнă вăрăм хăмăшсен хушшинче çухалчĕç.

Уроксем хыççăн кашни кунах класпа чарлан ташши курма кӳлĕ хĕррине чупма тытăнтăмăр. Урăх пире нимĕн те кирлĕ мар. Тăхтавра та ăмăртмалла, пĕр-пĕрне пӳле-пӳле кайăксем пирки кăна калаçатпăр. Ытармалла мар илемлĕ-çке! Хирехирĕç тăрса ташша çапни мĕне тăрать!

– Пĕр-пĕрне юрататçĕ вĕсем. Акăшсем пекех, пĕри вилсен хăйсен валли урăх мăшăр шырамаççĕ, савнă тусĕшĕн хурланса пĕччененех пурăнса иртте-реççĕ. Ак кăштахран чарлан чĕпписем тухĕç, курса киленмелли малалла-ха, – ăнлантарать пире Васук тете. Кӳлĕ çийĕн мĕнешкел вĕçеççĕ тата! Çинçе, вăрăм мăйĕсене тăсаççĕ те сарлака çуначĕсене сулласа вашлаттараççĕ.

– Епле ирĕклĕ вĕсем, çунатлă, ăçта каяс килет, çавăнта вĕçме пултараççĕ тата кунĕпех шывра чăмпăлтатаççĕ. Эх, пĕрре кăна вĕçсе курасчĕ пирĕн те. Шыва та тăраниччен кĕме çук-çке, атте-анне вăрçать, – тетĕп тантăшăма.

– Ăхă, – килĕшет Нина пуçне сулса, вăл та манпа пĕрле темиçе тинĕс леш енчен вĕçсе килнĕскерсене ăмсанса сăнать.

Кĕсье тулли çăкăр татки, тулă тавраш йăтма пуçларăмăр çырма хĕрне. Кĕске хушăрах алла хăнăхма пуçларĕç пирĕн çунатлă туссем. Вĕрентекенсем те, атте-анне те эпир вăхăта пĕрмаях кӳлĕ хĕрринче ирттернĕшĕн ятламастчĕç. Шывĕ те тарăнах мар та, тапса тăракан çăл куçĕсем те çук, çавăнпа шикленмен. Пĕр Тимухха тетене çеç килĕшместчĕ эпир çĕрĕн-кунĕн айкашни. Ялти ватă сунарçă вăл.

– Ух, вĕренес шухăш та çук çаксен. Аçăр-аннĕре килтĕрĕшре пулăшасчĕ, – тесе темиçе те мăкăртатса иртни хăлхана кĕретчĕ.

Пĕр каçхине вăл пăшалне çакса Юманлăхалла утрĕ, чарăнса пирĕн çине вăрахчен пăхса тăчĕ те чăмăркка кăтартса хăварчĕ. Мĕншĕн, ăнланаймарăмăр. Тепĕр кунхине шкулта ирех чарлансенчен пĕрне сунарçă персе вĕлернĕ текен усал хыпар сарăлчĕ. Ĕненмерĕмĕр. Кӳлĕ хĕррине кайма пăрахчăр тесе вĕрентекенсем юри шухăшласа тупнă пуль тесе хамăра лăплантартăмăр. Уроксем вĕçленессе аран кĕтсе илтĕмĕр çав кун. Класс ертӳçи те пирĕнпе пĕрле пычĕ. Васук тете тахçанах çитсе ларнă. Утрав çинче чарлансенчен пĕри çеç. Вырăнтан хускалми тăрать, чĕрĕ мар тейĕн, çунаттисене те вылятмасть. Васук тетен сасси тытăннă, куçĕ шывланнă.

– Чĕпписене кĕтсе илейменĕмĕр, ачамсем, амине сунарçă пенĕ, халĕ виличченех мăшăрĕшĕн кулянса пурăнĕ ĕнтĕ мĕскĕн. Таса кайăксем вĕсем, хăйсен юратăвне сутмаççĕ, пĕр-пĕрне урăххипе улăштармаççĕ. Сирĕнпе, шăпăрлансемпе, паллах, кун пек вăрттăн та ачаш туйăм çинчен калаçма иртерех-ха, анчах та упрăр ăна, вăл черчен те илемлĕ пултăр. Пурнăçра кирлĕ марпа çыхланса ан вараланăр, – терĕ шухăша кайса ларнă хыççăн.

Ĕнтĕ чылай çул иртрĕ унтанпа. Эпир те шкултан вĕренсе тухса аяккалла саланса пĕтрĕмĕр. Ял вĕçĕнчи кӳлĕ çаплипех ялтăртатса выртать. Ун варринчи утрав çинче шурă чарлан пурăнать. Пĕччененех халĕ те. Мăшăрĕ вилнĕ хыççăн вăл ташланине нихăçан та курман. Çулленех класпа пĕрле çакăнта пуçтарăнатпăр. Каçхине кӳлĕ хĕрринче кăвайт чĕртетпĕр. Пире курнă майăнах икĕ шурă çунаттине сарса кӳлĕ çийĕн çаврăнма тытăнать, паллать тейĕн. Пĕрре çӳлелле хăпарать те çиçĕм пек аялалла анать. Вĕçсен-вĕçсен çуйханса илет. Тем каласшăн пекех туйăнать мăнтарăн кайăкĕ. Сехечĕ-сехечĕпе те сăнаса ларма хатĕр ăна. Васук тете тахçанах çук ĕнтĕ. Вăл каланисене ун чухне ăша хывман, тен, ăнланман та. Çапах та асра юлнă. Çĕр çинче тасалăхран лайăххи, унран ырăраххи мĕн пур-ши? Шел, паллах, чарлана, пĕччен вăл, анчах та тем пек тунсăхлать, кулянать пулин те хăйĕн таса юратăвне упраса пурăнать. Çакă пĕлтерĕшлĕрех мар-и-ха? Унчченхи пек ташламасть шурă кайăк, савăнма сăлтавĕ çук унăн. Пĕччен юлнă пулин те вăл çунатлă. Аякка-аякка пĕр чарăнми вĕçет те вĕçет.

**Елена ВУТĂШПИ.**

ÇУТ ÇАНТАЛĂК – ПИРĔН ТУС

# Шур кĕпеллĕ пикесем

Чӳречерен курăнакан çичĕ яштака хурăна кулленех сăнатăп. Пĕр предприятин тимĕр хӳми çумĕнче ешерекенскерсем ытти йывăç хушшинче уйрăмах капăр та илĕртӳллĕ. Пурте пĕр ретре вĕсем. Тумĕпе кăна мар, çӳллĕшĕпе те, кӳлепипе те пĕрешкелскерсене йĕкĕрешсем тейĕн. Чиперккесен кăтра вăрăм çивĕчĕсене вăл-вĕл вылятать ачаш çил. Шапшурă кĕпеллĕ, хĕреслĕ симĕс саппунлă чăваш пикисем вăйă картине тухнăн туйăнать. Йăрăс пӳллĕ, çинçе пилĕклĕ, ăшă кулăллă хĕрсем акăшсем пек шуса ташлани куç умне тухать.

Анчах пĕррехинче хам мĕн курнине çийĕнчех ăнланса та илеймерĕм. Чӳрече умĕнчи çаралăха пач кĕтменрен куçăм чарăлчĕ, чĕлхе вĕçне килнĕ сăмахăм çухалчĕ. Турăçăм! Ăçта хурăнсем? Чуна тыткăнлакан илем вырăнне çăра тĕтĕмпе хуралнă çӳллĕ мăрьесем, кивĕ тĕксĕм çуртсемпе гаражсен речĕсем, унталла-кунталла куçакан мăнаçлă крансем куçа тирĕнеççĕ. Тинкеререх сăнасан тинех уçăмланчĕ ӳкерчĕк. Пилĕк-ултă хутлă çурт çӳллĕш çитĕннĕ шурă тунасене касса татса тирпейлеме ĕлкĕрнĕ иккен. Çурт тăрринче вĕткеленекен арçынсем вĕсен вĕлтĕр-вĕлтĕр хулăн çивĕчĕсене пуртăсемпе начлаттара-начлаттара çĕрелле ывăтаççĕ. Кăштахран йĕкĕрешсене шелсĕррĕн тĕплесе Çĕр аннемĕртен ĕмĕрлĕхе уйăрчĕç. Çичĕ пĕртăван кӳршисем – çăка, пилеш, вĕрене – хурланса хӳхленĕн вăштăр-вăштăр çилпе авăна-авăна хумханаççĕ, пуçĕсене пĕксе пикесемпе сыв пуллашаççĕ.

Куç тулли илем карри евĕрччĕ хурăнсем... Ăна сирсе ывăтса сĕмсĕррĕн таптарĕç. Халĕ чӳрече умне чун туртмасть. Унта кичем, тĕксĕм, пушă...

# Хура хурăн

Кăн-кăвак тӳпере сар хĕвел йăл-йăл çиçет. Янкăр кун унăн ылтăн шевлисемпе пушшех çуталса савăнать. Кĕмĕлĕн-мерченĕн чăл та чăл йăлтăраççĕ куçа çиекен пайăркасем.

Чи-чи-чи-чи-чик! хавассăн чиклетет кăсăя сип-симĕс чăрăшсен хушшинче. Инçе те мар çерçисем ăмăртмалла чĕвĕлтетеççĕ.

Хула урамĕнчи илемпе киленсе утнă май куç умне хуп-хура туналлă хурăн тухса тăчĕ. Ытарми тавралăх. Унта – хăрăмлă йывăç... Чуна çӳçентерекен сивлек ӳкерчĕк. Алхасуллă пушартан аран хăтăлса тăлăха юлнăн курăнать вăл. Сукмак хĕрринчи уçă вырăнта, ытти йывăç-тĕмрен уйрăммăн лараканскер, тахçан иртен-çӳрене капăрлăхĕпе илĕртнĕ, шăрăхра – сулхăна чĕннĕ, çумăрта – хӳттине илнĕ. Çӳллĕ, хӳхĕм курăк хушшинче пушшех ытарминчĕ чиперкке. Ăна утă çулакан яштака кĕлеткеллĕ, кăтра çивĕтлĕ, шурă кĕпеллĕ пикепе танлаштарма пулатчĕ. Анчах этем тискерлĕхне пула чечеkkен вутçулăмра тертленсе асапланма тивнĕ.

Экологи уйăхлăхĕнче йывăç-тĕмĕн касса иртнĕ турачĕсене хай хи хурăн айне купаланă. Унта çăвĕпех çатăр типнĕскерсене пĕррехинче вут хыпса илнĕ... Тахăшĕ тирпейсĕр, çăмăлттай, асăрханусăр пулнишĕн илемĕн, çут çанталăкăн мĕншĕн шар курмалла, инкек тӳсмелле?

**Альбина ИСЕМПИ.**

# И-ХИ-ХИК

**Икĕ тантăш тĕл пулнă:**
**– Салам. Сана курманни нумай пулать.**
**– Çирĕм çула яхăн курман пĕр-пĕрне.**
**– Эпĕ вара сана пальторан палласа илтĕм.**

* * *

**– Арăмупа мĕншĕн уйрăлатăн?**
**– Пĕлетĕн-и, çĕрĕпе килте пулман. Ирхине вара аппăшĕ патĕнче çывăртăм терĕ.**
**– Вара?**
**– Суять! Унта эпĕ пулнă!**

* * *

**Виççĕ тултарнă ятпа арçын ачана кукамăшĕ шывпа пемелли пистолет парнелет. Ăна курсан савăнсах каять хайхискер, тӳрех шыв тултарма чупать. Амăшĕ пачах кăмăлсăр.**
**– Анне, эпир сана çакнашкал пистолетсемпе еплерех тарăхтарнине ас тăватăн-и? – ыйтать çиллессĕн.**
**Ватă чеен йăл кулса:**
**– Паллах.**

* * *

**Икĕ хĕр тантăш:**
**– Эсĕ питĕ чее-çке. Тилĕ пекех.**
**– Эпĕ кашни кунах чăх какайĕ çиетĕп вĕт.**

* * *

**Ывăлĕпе ашшĕ:**
**– Атте, хĕвел тухăçĕнче арçын арăмĕпе туй хыççăн çеç лайăх паллашать тени тĕрĕс-и?**
**– Ку вăл хăть хăш çĕр-шывра та çаплах, ывăлăм.**

* * *

**– Сан аппу мĕншĕн шăл тухтăрĕ пулма тĕв тытнă?**
**– Ара ăна арçынсем ун çине çăвар карса пăхни килĕшет.**

* * *

**Тепĕр чухне шкулти пĕрремĕш виçĕ çул камăн ашшĕ-амăшĕ лайăхрах ӳкерни-çыпăçтарнин ăмăртăвĕ евĕрех туйăнать.**

* * *

**Окулист патĕнче прапорщик куç тĕрĕслет.**
**– Мĕнле сас палли?**
**Шăп.**
**– Мĕнле сас палли?**
**Шăп.**
**– Курмастăр-им?**
**– Куратăп-ха, манса кайрăм.**

* * *

**Старшина тин килнĕ салтаксенчен ыйтать.**
**– Так, эсĕ ăçта вĕреннĕ?**
**– Çичĕ класс!**
**– Юрать. Эсĕ тата?**
**– МПУ!**
**– Мĕн сăмса айĕнче мăкăртататăн? Вулама пĕлетĕн-и хăть?**

* * *

**Вĕрсе хăпартмалли матрас туянтăм. Инструкцире вун-вун чĕлхепе: "Шыва кĕнĕ чухне усă курма юрамасть" тенĕ. Вырăслинче çеç: "Шыва кĕнĕ чухне айккинчи пиçиххисенчен тытăр".**

* * *

**Хĕрарăм арçынпа йăпăлтатса.**
**– Савниçĕм, манăн çӳç илемлĕ-и?**
**– Илемлĕ.**
**– Куç хитре-и?**
**– Хитре.**
**– Сăмса?**
**– Сăм... – калама тытăннă çĕртен арçын тăп чарăнать те иккĕленсе: – Эсĕ тĕкĕрте курăнмастăн-им? – тет.**

* * *

**– Маша пачах та сăрланмасть. Мăшăрĕпе вара миçе çул пĕрле пурăнаççĕ ĕнтĕ.**
**– Вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши?**
**– Ун упăшки ĕçет.**

* * *

**Уяв хыççăн хĕрарăм мухмăрпа аптăранă. Ĕçме пăрахнă упăшкинчен хайхи:**
**– Итле-ха, Толя, унччен ĕçнĕ вăхăтра ирпе пуç ыратсан эсĕ мĕн тăваттăн?**
**– Эсĕ кăшкăрнине итлеттĕм.**

* * *

**Йытăпа уçăлма тухнăччĕ. Ача кӳмипе çӳрекен мăшăр патĕнчен иртсе каяттăмăр. Манăн йытă пĕрре вĕрчĕ. Хĕрарăма килĕшмерĕ çакă.**
**– Йытту кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте вĕрет. Манăн вара ача çывăрать, – пуçларĕ вăл кăшкăрашма.**
**– Чарăн, эсĕ йытăран та хытăрах шавлатăн, – сăмах хушрĕ мăшăрĕ.**
**– Вăл çав-çавах ачана вăратрĕ.**
**– Пирĕн пепке çывăрать.**
**Амăшĕ тилмĕрсе пăхрĕ те – кӳмере ача çук та иккен.**
**– Вăт чун çунтармăш! Эсĕ ачана килте манса хăварнă... – хыпăнса ӳкрĕ хайхискер.**
**Çав самантрах кил еннелле ыткăнчĕ вăл. Эпир, эпĕ, манăн йытă, çывăракан тĕпренчĕкне алăра тытса тăракан арçын... унăн çурăмне кăна курса юлтăмăр.**

* * *

**– Манăн арăм патне МТСран тăтăш СМС килме пуçларĕ. Тем, килĕшмест ку мана. Иккĕленместĕмччĕ-ха... Анчах эпĕ еркĕн ячĕ вырăнне БИЛАЙН тесе çырнă.**

* * *

**– Манăн сĕтел çинчи тусана кам сăтăрнă? Унта телефон номерĕсене çырса хунăччĕ... – килте вĕткеленет арçын.**

* * *

**– Санăн çутă ĕмĕт пур-и?**
**– Начарланас килет.**
**– Тыт та начарлан.**
**– Кайран ĕмĕтсĕр пурăнмалла-и?**

* * *

**– Зоопаркра мĕн килĕшрĕха? – ыйтать амăшĕ ывăлĕнчен.**
**– Мана – тигр, аттене – кушак çури.**
**– Зоопаркра кушак çури те пур-и?**
**– "Манăн кушак çури билет сутать, вăл яланхи пекех чипер, ăна никампа та танлаштарма çук", – терĕ юлташне атте.**

* * *

**– Эсĕ мĕншĕн ĕнер ĕçе килмен? – кăмăлĕ пăсăлнă пуçлăхăн.**
**– Эпĕ килнĕччĕ, анчах ун чухне ĕçтешсем киле саланма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ.**


## *РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ*

## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**28.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**55.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**58.Гравмассу,** щебень, **песок,** керамзит, **бетон,** чернозем, **навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**587.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. **Скидки.** Т.8-927-667-62-02

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**513.Чистка колодцев. Т. 8-961-342-90-59.**

**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**636.ТРЕБУЮТСЯ** в Новочебоксарск **операторы ТПА** /обучение без отрыва от производства, з/п сдельная, график работы 2/2/. Т/ф: 73-03-08, 74-11-81.

## СУТАТĂП

**580.ÇУРТ** /газ, шыв пур/. **Элĕк р-нĕ, Вылпасар.** Т. 8-927-857-23-54.



«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

Золотой фонд прессы MMVIII. Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редакторшăн – Е.М.АТАМАНОВА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7870. Заказ 3552.